Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм [illegible] пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЮЛЬ 8 ЕРНЕКУН 155 (4968) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать | ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ | Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Ĕçтурĕнĕн 6—23

Çĕнĕ займа кĕске вăхăтра вырнаçтарса çитерер

Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Займĕ аначлăн саралать. Совет халăхĕ правительстви çĕнĕ займ кăларма йышăннине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕ. Хуласенче, ялсенче пулса иртнĕ йышлă митингсенче ĕçсыннисем пурте пĕр çын пек пĕр шухăшлă пулса çĕнĕ займа ырласа йышăнчĕç.

— Правительствă çĕнĕ займ кăларма йышăннине пĕлсен епĕ питĕ савăнтăм. Тăван çĕршыв тĕрекĕ татах та вăйлăрах çирĕплентĕр. Çĕнĕ займа епĕ 200 тенкĕлĕх çырăнатăп,—тенĕ Сăкăтри (Патăрйел р-нĕ) „Хĕрлĕ Йалав" колхоз членĕ Йевграфăв йулташ займ çырăнса илнĕ чухне. Çакăн пек ĕнтĕ пирĕн ĕçсыннисен кăмăлĕ.

Чăваш республикинче Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне 9.260.000 тенкĕлĕх сарнă. Пĕлтĕр çак тĕле Оборонă займне республикăра 6.907.000 тенкĕлĕх сарнă пулнă. Шупашкарпа Улатăр хулисенче займа пĕлтĕрхи хисепрен ытла сарнă. Çавăн пекех Канаш хулинче те. Республикри пур хапрăк-савăтсенчи, уйрăмăнах Канашри вакунсем йусакан савăтри, Куславкка тата Çĕмĕрле комбиначĕсенчи рабочисемпе служăщчисем хушшинче займ çырăнасси пысăк çĕкленӳпе пулса пырать.

Йалсем те хуласенчен йулмаççĕ. Кувакинă районĕнче ийулĕн 3-мĕшне колхозсенче займа 83 пин тенкĕлĕх сарнă. Шăхасан районĕнче колхозниксем пĕр кун хушшинчех 25 пин тенкĕлĕх займ çырăннă.

Рабочисем, служăщчисем, ĕçсыннисем çĕнĕ займа нумайĕшĕ пĕр уйăх, тата пĕр уйăх ĕçукçинчен ӳстерсе çырăнаççĕ. Чылай йалсенче колхозниксемпе йединоличниксем займ çырăннă хыççăнах укçине те çавăнтах тӳлесе татма тăрăшаççĕ. Сăкăтри (Патăрйел р.) колхозниксем займ тухнă кунах 2 пин тенкĕлĕх çырăнса, çавăнтах 467 тенкĕ займ укçи пухса панă. Туликов колхозник займа 150 тенкĕлĕх çырăнса укçине çав вăхăтрах парса татнă. Сандыркин колхозник 30 тенкĕ, унăн арăмĕ 45 тенкĕ тӳленĕ. Республикăра çĕнĕ займшăн укçа 12.660 тенкĕ пухнă та ĕнтĕ. Кун пек тĕслĕхсене пур çĕрте те курма пулать. Вăл тĕслĕхсене пирĕн йышлатса пымала. Вăл тĕслĕхсем совет çынни совет займне чыславине, йуратнине кăтартаççĕ.

Займа сарасси вăл—хăйĕн тăван çĕршывне вĕçĕмсĕр йуратакан совет халăхĕн тăван ĕçĕ. Совет халăхĕ социалисăмлă çĕршывăн хăватне пĕтĕм вăйпа, пурлăхпа, мĕн пур пултарулăхпа тĕреклетсе пыма хатĕр. Займ çырăнса илсе, ĕçсыннисем пирĕн коммунисла партине, совет правительствине, халăхсен çулпуçне—Аслă Сталина пĕтĕм чĕререн хытă йуратнине, халăхăн моральлĕ-политикăла пĕрлĕхне, пĕр шухăшлă, пĕр кăмăллă пулса тăнине кăтартать.

Пирĕн займ укçи ăçта кайнине совет гражданинĕ лайăх пĕлет.

— Епĕ çак çĕнĕ займа хавасланса пĕр уйăхри ĕç укçи чухлĕ çырăнатăп. Займ укçи хамăрăн тăван çĕршыва çирĕплетме, вăйлатма, татах та савăнăçлă та телейлĕ пурнăç тунă çĕре кайать. Çакна епĕ лайăх пĕлетĕп. Çирĕплентĕр, вăйлантăр чечеклĕ социалисăмлă тăван çĕршыв!—тет Детскомиççин Шупашкарти хапрăкĕнче ĕçлекен работницă Журавльова йулташ.

Займ вăл—çĕнĕ хапрăк-савăтсем, çĕнĕ шкулсем, пульницăсем, курортсем, йаслĕсем, театрсем, клубсем. Займ укçи ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатас, çĕршыв оборонине тĕреклетес çĕре кайать. Çавăнпа та ĕнтĕ совет правительстви кăларнă займсем çулран çул ытларах та ытларах саралса пыраççĕ.

Займран ĕçсыннисем пысăк тупăш илеççĕ. Чăваш республикинче йулашки пилĕк çул хушшинче ĕçсыннисене выльăв укçи 8.806.000 тенкĕ панă. Кунсăр пуçне тата займ тытакансем займ облигацийĕсем тăрăх процент укçи нумай илеççĕ. Çаксем вĕсем пурне те çĕнĕ займа ытларах та ытларах çырăнса илме хавхалантараççĕ.

Çĕнĕ займа ĕçсыннисем тулли кăмăлпа хавасланса çырăнаççĕ. Партипе совет организацийĕсем умĕнче тăракан задач вăл—займа кĕске вăхăтра, йĕркелĕ вырнаçтарса çитересси. Анчах пирĕн республикăра пур районсенче те çакна тивĕçлипех ăнланса илнĕ теме çук-ха. Хăшпĕр районсенче парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсем займ çинчен ĕçсыннисен йышлă массине анлăн ăнлантарса парас ĕçе çийĕнчех, хăвăрт, йĕркелĕн организацилеме пултараймарĕç. Уйрăмăнах Канаш, Ишлей районĕсене илсе кăтартмала. Канаш районĕнче çĕнĕ займа сарма йалсенче ийулĕн 4-мĕшĕнче тин тытăннă. Çавăн пекех Вăрмар районĕ те начар пырать. Елĕк, Шупашкар районĕсенче райком йалсене йанă агитатăрсем часах кайала таврăнса килеççĕ.

Районсенче, йалсенче профсойуз организацийĕсем, уйрăмăнах, пуçламĕшпе вăтам шкулсенче ĕçлекенсен сойузĕн членĕсем займ сарас ĕçе йапăх хутшăнаççĕ. Профсойуз обкомĕсем займ сарас ĕçе тивĕçлипе йертсе пымаççĕ.

Аласталăх промысла ертелĕсен членĕсем, йединоличниксем хушшинче займ сарасси чылайах кайа йулса пырать. Çак тĕслĕхсем вĕсем займ сарас ĕç пур çĕрте те йĕркелех пулса пыманни çинчен калаççĕ.

Партипе совет тата профсойуз организацийĕсен çакăн пек çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пырас пулать. Займ сарас ĕçĕн ăнаçлăхне организацилĕ тата политикăлă-массăлă ĕçе лайăх йĕркелени татса парать. Агитаци, ăнлантару ĕçне хулара та, йалта та тивĕçлипе анлăн сарни кирлĕ. Çак ĕçе актива сарлакан хутшăнтарас пулать. Верховнăй Советсене суйланă вăхăтра пухнă пуйан опытпа усă курмала. Ун чухне агитатăрсем, доверенăйсем пулса ĕçленĕ çынсен пайанхи паха ĕçĕ—вăл ĕçсыннисене çĕнĕ займ çинчен тĕплĕн ăнлантарса парасси.

Займ сарасси—финанс органĕсемшĕн, перекет кассисемшĕн политикăлă пысăк екзамĕн. Вĕсен займ сарас ĕçре йалсоветсене куллен пулăшса пымала, финанс активĕпе—финанс секцисемпе, займ уполномоченнăйĕсемпе лайăх ĕçлемеле, финанс активĕн вăйне тĕрĕс йĕркелемеле. Займ çырăнтарассине вăйлатса пынипе пĕрлех, çĕнĕ займшăн укçа пухассине организацилемеле. Çаксем пулаççĕ ĕнтĕ финанс организацийĕсен умĕнче тăракан пайанхи задачсем.

Займ çырăнас ĕç пысăк хаваслăхпа пыни—займ вырнаçтарас ĕçе пур çĕрте те йĕркелĕ туса пыма ытать. Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне большевикла вырнаçтарса çитерер, çĕршывăн финанс тĕрекне татах та татах ӳстерер!

Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займĕ—тăван çĕршывăн хăватне малала тĕреклетмели займ. Пурте займ çырăнса илĕр!

Çĕнĕ шкулсемпе пульницăсем уçма, специалиссем хатĕрлеме

КАНАШ. Вакунсем йусакан савăтри рабочисемпе инженерлă-техникăлă работниксем çĕнĕ займа пысăк хастарлăхпа çырăнаççĕ. Хĕрлĕ йалавлă тимĕрç цехĕнче ĕçлекенсем малта пыраççĕ. Кунта займ çинчен решени тухнă кунах 77 рабочи 20 пин тенкĕлĕх займ илме çырăннă. Кукльайĕвпа Лашманăв стахановецсем уйăхри ĕç укçи чухлĕ—600-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Йавăç каскалакан цехри чи лайăх стахановкă, РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ Йекатеринă Антонăвнă Антонăвă йулташ чи малтан уйăхри ĕç укçи чухлĕ çырăнчĕ.

Тавар комбинатĕнчи нормировщик-выдвиженец Григорйĕв йулташ çапла каларĕ:

— Епĕ виçĕ çул хушшинче ахаль рабочирен инженерлă-техникăлă работнике çити ӳсрĕм. Епĕ партипе правительствăна тав тăватăп, вĕсем мана социалисăмлă общĕствăри малта пыракан çын турĕç. Епĕ правительствă çĕнĕ займ кăларма йышăннине пĕтĕм кăмăлпа кĕтсе илтĕм. Перекетленĕ укçа-тенкĕ çĕнĕрен специалиссем хатĕрлеме, çĕнĕрен аслă шкулсем уçма кайать. Çĕнĕ займа уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăнатăп,—терĕ.

В. Ластăчкин.

Цехпа цех ăмăртаççĕ

КУСЛАВККА. Комбинатри рабочисем правительствă займ кăларнине хавасланса йышăнчĕç. Çĕнĕ займ кăларнă йатпа савăтра митинг пулса иртрĕ. Йавăç суракан цехри стахановкă В. Красновă йулташ митингра çапла каларĕ:

— Епĕ çĕнĕ займа пĕр уйăх ĕç укçи чухлĕ çырăнса илетĕп. Ман пекех çĕнĕ займа çырăнма савăтри пĕтĕм рабочисене чĕнетĕп!

Çакăн хыççăнах Козлов, Оçипăв, Мйаçников, Косташковă т. ыт. йулташсем те çĕнĕ займа пĕрер уйăх ĕç укçи чухлĕ çырăнчĕç.

Комбинатри цехсем займ çырăнма пĕр-пĕрне социалисăмлă ăмăртăва чĕнчĕç. Йавăç суракан цех каскалакан цехпа социалисăмлă ăмăртăва тухрĕ. Çурнă йапаласене пухакан цехри тата паравоз çинче ĕçлекен машиниссем çĕнĕ займа кашнийĕх пĕрер уйăх ĕç укçи чухлĕ çырăнчĕç. Машиниссем Стафейĕв йулташ 350 тенкĕлĕх, Гуçĕв йулташ 250 тенкĕлĕх, чернорабочисенчен Тимофейĕвпа Шиповалăв йулташсем 150-шер тенкĕлĕх, механически цехри тимĕрç-стахановец Уçтинăв—300 тенкĕлĕх, Кормилицин йулташ 300 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Займ çырăнас ĕç пуçланнă кунах каçхине 6 сехет тĕлне комбинатра пурĕ 77.850 тенкĕлĕх займ çырăнчĕç.

М. Корнилăв.

Займ çырăнас ĕç вăйлансах пырать

ШĂХАСАН. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ займ кăларасси çинчен йышăннă постановленине радио тăрăх пĕлтерсенех, район центрĕнче тата колхозсенче митингсем туса иртерчĕç.

Çĕнĕ займ кăларнине пур çĕрте те кăмăлласа йышăнчĕç. Район центрĕнчи рабочисемпе служăщчисен митингĕ çĕнĕ займа пĕр уйăхри ĕç укçинчен кайа мар çырăнма тата займа ик-виç кун хушшинче вырнаçтарма пулса обйазательствă илсе резольуци йышăнчĕ.

Митинг хыççăн колхозниксемпе йединоличниксене займ çинчен ăнлантарма ПСК(б)П Шăхасан райкомĕ 29 коммуниса, ПСÇЛКС райкомĕ 28 комсомолеца йалсене йачĕç.

Малтанхи кунах район центрĕнчи рабочисемпе служăщчисем 15 пин тенкĕлĕх, районĕпе 50 пин тенкĕлĕх çырăнчĕç. Займ çырăнас ĕç вăйлăлансах пырать.

А. Николайĕв.

В. Чернов.

Колхозниксем ăмăртса çырăнаççĕ

Чуманкас йалсоветĕнче (Тутаркас р.) пур колхозсенче те Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕррремĕш çулхи кăларăм) Займ кăларни çинчен пĕлтернине илтсенех митингсем пулса иртрĕç. Митингсем хыççăн пĕтĕм колхозниксем çĕнĕ займа пĕр пĕрнипе ăмăртса çырăнма пуçларĕç. Малтанхи кунах йалсовечĕпе 7.670 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Ку шутран Енгĕлс йачĕпе тăракан колхозра 3.700 тенкĕлĕх çырăннă.

Г. Иванов.

Займ çинчен ăнлантараççĕ

ЕЛĔК (телефонпа). Районри колхозсенче çĕнĕ займ кăларнă йатпа савăнăçлă митингсем пулса иртеççĕ. Ийулĕн 2-мĕшĕнче Жданав йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен митингĕ пулчĕ. Митингра 66 çулхи Макçим Федотăв йулташ тухса çапла каларĕ:

— Епĕ елĕк начар пурăннă, халĕ колхозра савăнăçлă, çителĕклĕ пурнăçпа пурăнатăп. Ийунĕн 26-мĕшĕнче епĕр РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене çĕршывăн чи шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсене, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсене суйларăмăр. Çак чаплă çĕнтерӳшĕн пĕтĕм çĕршыв савăнать, малашне тата пысăкрах çĕнтерӳсем тăвăпăр. Епĕр ийулĕн 1-мĕшĕнче радио тăрăх Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне (пĕррремĕш çулхи кăларăм) кăларнине пĕлтĕмĕр. Займ кăларни çинчен хыпар илтни пире татах та савăнтарчĕ. Епĕ вата пулсан та çак çĕнĕ займа çырăнса, укçине пайанах тӳлесе тататăп. Епĕ кашни ĕçсынни çĕнĕ займа илессе шанатăп. Тĕреклентĕр, хăватлантăр пирĕн çĕршыв, нимĕнле тăшман та пирĕн чечекленсе ӳсекен çĕршыв çине аллине тăсма ан хăйтăр. Йулташсем, пурте çĕнĕ займа çырăнăр! Çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ тăвăр!

Сывă пултăр коммуниссен партийĕ, халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин!

Халĕ Жданăв йулташ йачĕпе тăракан колхозра активлă колхозниксем хире тухса çум çумлакан, çĕрулми купалакан, навус кăларакан колхозниксем хушшинче çĕнĕ займ çинчен ăнлантараççĕ. Колхозниксем кашнийĕх çĕнĕ займа илме çырăнаççĕ.

110.140 тенкĕлĕх çырăннă

Канашпа—Шупашкар хушшинчи чукунçул строительствинчи рабочисемпе служăщчисем çĕнĕ займа хавасланса çырăнаççĕ. Чукунçул строительстви правленинче ĕçлекенсем ийулĕн 5-мĕшне çĕнĕ займа 26.500 тенкĕлĕх çырăннă. Виççĕмĕш участкара ĕçлекен рабочисем 13.755 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Çак виççĕмĕш участкăри стахановец-бригадирсем Тарасăвпа Пушков йулташсем пĕрер уйăх ĕç укçи чухлĕ, чукун çулĕ тăрăх ĕçлесе çӳрекен рабочисем 36.600 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Ийулĕн 5-мĕшне чукунçул строительствинче пурĕ 110.140 тенкĕлĕх çĕнĕ займ çырăннă.

Н. Соколов.

В. К. КОККИНАКИ

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ льотчик—высотник В. Коккинаки тата чаплă штурмăн А. Брйандински Мускавран вĕçсе тухса Владивосток районне вĕçсе çитнĕ. Вĕçем 24 сехет те 36 минутра 7.600 километр вĕçнĕ.

(„Прессклише").

Полинă Оçипенко, Верă Ломако тата Маринă Расковă—Мускавра

Йарославски вокзалта чаплăн кĕтсе илни

Ийулĕн 6-мĕшĕнче виçĕ паттăр хĕрарăм, çарти виçĕ мухтавлă льотчицă, ийулĕн 2-мĕшĕнче Çевастопаль—Архангельск маршрутпа ниçта анса лармасăр вĕçсе тухнăскерсем—Полинă Оçипенко, Верă Ломако тата Маринă Расковă Мускава çитнĕ. Совет халăхĕн хăйула та паттăр виçĕ хĕрĕ социалисăм çĕршывĕнчи ирĕке тухнă хĕрарăм мĕн тума пултарнине пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартрĕç. Вĕçнĕ чух çул çинче тĕл пулакан йăварлăхсене çĕнтерсе пырса, совет льотчицисем большевикла хăйулăхпа паттăрлăхăн образецне, чăтăмлăхпа пысăк мăстăрлăх образецне кăтартрĕç.

Хăйулă льотчицăсене Мускав чаплăн кĕтсе илчĕ.

Вокзалта льотчицăсене кĕтсе илекенсем хушшинче: Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн сывлăшçар вăйĕсен начальникĕ иккĕмĕш рангри командарм Локтионăв йулташ, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн сывлăшçар вăйĕсен çар совечĕн членĕ дивизи комиссарĕ Овчинкин йулташ, паллă льотчицă-орденоносец—ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ Гризодубăвă йулташ, „МП-1" гидросамольот конструкторĕ Берийĕв йулташ, паллă льотчиксемпе парашутиссем.

Вокзал умĕнче хăйулă льотчицăсене столицăри темиçе пин ĕçсынни саламланă.

(ТАСС).

Республикĕпе 9.260.000 тенкĕлĕх çырăннă

Ийулĕн 7-мĕшне Чăваш республикинче Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕррремĕш çулхи кăларăм) Займне 9.260.000 тенкĕлĕх çырăннă. Çак шутран рабочисемпе служăщчисем 7.561.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе ĕçсынни йединоличниксем 1.699.000 тенкĕлĕх çырăннă.

Улатăр, Шупашкар тата Канаш хулисенчи рабочисемпе служăщчисем çĕнĕ займа иртнĕ çулхи займран иртерсе çырăннă.

Займ илме çырăнассипе пĕрлех, займшăн укçа пухас ĕç пырать. Республикĕпе илсен пайанхи куна (пĕтĕмпех шута илмен хисеп тăрăх) 12 пин те 600 тенкĕ укçа пухнă.

Бурйат-Монгол АССР Верховнăй Совечĕн пĕррремĕш сессийĕ

Ийулĕн 6-мĕшĕнче Улан-Уде хулинче, Бурйат Монгол АСС Республикин 15 çул тултарнине уйавланă кун, Бурйат-Монгол АССР Верховнăй Совечĕн пĕррремĕш сессийĕ уçăлнă.

Улан-Удери ĕçсыннисем çак чаплă событине калама çук пысăк хаваслăхпа паллă тунă. Физкультурниксен пысăк парад пулса иртнĕ, унта 5 пин физкультурник пулнă.

Халăх гуляньине республикă столицинчи ĕçсыннисем 80 пин çын ытла хутшăннă.

Китайри вăрçă

Вăтам Китайра питех те хайар атакăсем тунă хыççăн йапонецсем Матанпа Пынцзене (Аньхуей провинции столицинчен—Аньцин хулинчен кăнтăр хĕвеланăç йеннеле) тытса илнĕ. Матан хуличе сывлăшран бомбăсем пăрахса йăлтах çĕмĕрсе тăкнă. Китай çарĕсем Пынцзе хулине йĕри-тавра хупăрласа илнĕ.

Темиçе уйăх хушши лăпкă тăнă хыççăн Ухý районĕнчи фронтра каллех çапăçусем пуçланнă. Ийулĕн 5-мĕшĕнче çав района Йапони çарĕсем çĕнĕрен 2 пин салтак илсе пынă.

Йапонецсем Йанцзы шывĕн çурçĕр çыранĕ тăрăх малала кайма хăтланаççĕ, анчах та Китай çарĕсем вĕсене тытса чарса тăраççĕ, малала кайма памаççĕ. Китай çарĕсем Цзаньшань сывăхĕнче (Аньцинрен хĕвеланăçнелле) хăйсен позицисене çирĕплетнĕ.

Китай çарĕсене Цзянсипе Чжецзйан провинцисенче йапонецсен тылĕнче вăрçакан партизансем пысăккăн пулăшаççĕ.

Китай авиацийĕ йулашки вунă кун хушшинче Вăтам Китайра çĕнĕрен чаплă çĕнтерӳсем тунă. Йанцзы шывĕ çинче Йапонин 12 карапне тата 40 катĕрне шыва путарнă. Йапонин 23 çар карапне пысăккăн сийенленĕ.

Çак вăхăтрах Йапонин 28 самольотне персе антарнă.

Ийулĕн 6-мĕшĕнче Китайăн 2 самольочĕ Шанхай çине вĕçсе пынă та Шанхай çывăхĕнче Йапони аеродромĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Центрти фронтра Китай партизанĕсем активлăхĕ ӳссех пырать. Партизансем час-часах Шанхай тата Нанкин патне пырса тухаççĕ. Китай партизанĕсем Шанхай çывăхĕнчех вăрçнипе тата йапонецсем вĕсене хирĕç артиллерирен пенипе Йапони командованийĕн предстравителĕ те пышăннă. Китай ячĕ илсе кăтартнă тăрăх, Нанкин патĕнче вăрçакан партизансен хисепĕ 60 пин çынна çитет. Цзянси, Ханчжоу тата Хучжоу хушшинчи территорине, тĕпрен илсен, пĕтĕмпех партизансем контроль туса тăраççĕ.

Йапонецсем партизансем пырса тухса кайнă районсенчи халăхсене тискеррĕн асаплантарса вĕлереççĕ. Пуçĕсене касса татнă çынсен пуçĕсене йапонецсем хулари стенасем çумне çакса йараççĕ. Йапонецсем темĕнле тискер те хăрушă ĕçсем тăваççĕ пулин те партизансен речĕсем ӳссех пыраççĕ.

Çурçĕр Китайра Шаньси провинции хĕвеланăç пайĕнче пысăк çапăçусем Лиш районĕнче пыраççĕ.

Ийунĕн 28-мĕшĕнче Китай партизанĕсем Бэйпинçине (Бейпинран кăнтăрала) хыттăн тапăннă. Хулара йапонецсемпе партизансем хушшинче çапăçу пулса иртнĕ. Çав çапăçура йапонецсем 100 çын ытла вилнĕ.

(ТАСС).

• • •

Йапонецсем тытса илнĕ Китайăн чи пысăк хулинче—Шанхайра холерă чирĕ вăйлăн саралнă. Вăл йут çĕршыв çыннисем пурăнакан кварталсенче те саралнă. Çав кварталсенче 50 çын вилнине регистрациленĕ те ĕнтĕ.

(ТАСС).

МАО—ЦЗЕ—ДУН

Китайри коммуниссен партии, Китай халăхăн революцийĕ VIII-мĕш çулĕнчи паллă руководителĕсенчен пĕри. Вăл Китай республикийĕ ăраçна районĕнчи правительствă пуçлăхĕ.

(„Прессклише").

Китай авиацийĕн чаплă çĕнтерĕвĕсем

Ийунĕн 3-мĕшĕнче Китай самольочĕсем Вăтам Китайра Йанцзы шывĕ çинче Йапони флотĕ çине бомбăсем пăрахнă. Вĕсем Йапонин виçĕ пысăк çар карапне шыва путарнă.

Ийунĕн 4-мĕшĕнче Китай авиацийĕ çĕнĕ çĕнтерӳ тунă. Аньхуей провинции столици—Аньцин хули районĕнче Китай самольочĕсем Йапонин 5 çар карапне тата тепĕр авианосецне (пăрахут—аеродром) шыва путарнă. Авианосец çинче пилĕк самольот пулнă, вĕсене авианосецпа пĕрлех шыва путарнă. Çакăн хыççăн Йапонин Матан районĕнче тăракан çар карапĕсем (пурĕ 50 карап) Китай авиацийĕнчен хăраса шыв тăрăх анатала тарса кайнă.

(ТАСС).

Китай хĕрĕ—партизанкă. Ăна, йапонецсене хирĕç çапăçнă чухне калама çук хăйулă пулнăшăн, отрядра пурте хĕрĕ пулма уйăрнă.

(Союзфото).

Колхозниксемпе колхозницăсем, комбайнерсемпе тракториссем, шчербинăвцăсен чĕнĕвне йышăнăр, тырпула кăтартулă пухса кĕме социалисăмлă ăмăртăва хутшăнăр!

Йелчĕк—Патăрйел

Ăмăрту догăвăрне тĕрĕслерĕç

Темиçе çул хушши ĕнтĕ Йелчĕк районĕпе Патăрйел районĕ пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртса вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ. Йелчĕк районĕнчен Патăрйел районне килнĕ делегаци иртнĕ ик-виç кун хушши Патăрйел районĕ тырпулсене пухса кĕрес ĕçе мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухрĕ.

Делегаци Патăрйел районĕнче çакна палăртрĕ: тырпулсем иртнĕ çулхи пекех аван пулнă, анчах та хăшпĕр колхозсем çав ăнса пулнă тырпула пухса кĕме йапăх хатĕрленеççĕ. Машинă-трактăрлă станцийе илсен, вăл та хатĕр мар. 15 комбайнран халь те иккĕшне йусаса çитермен. Çĕнĕрен кăçал 8 комбайн илнĕ, анчах вĕçен моторсем хатĕр мар пирки пушшăн ĕçлеттерсе пăхман. Комбайнсене колхозсене йаман.

МТС тата молотилкăсене те йусаса çитермен. 13 молотилкăран 7 çеç йусанă, вĕсене те лайăх пахалăхпа йусаман. Машинăсене нихăшне те дезинфекцилемен.

Çитменнине тата МТС механик çуккипе аптăрат. МТС хăй тупнă механикпе Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ килĕшмен пулнă. Вара Çĕрĕç Комиссариачĕ хăй тупса йанă. Анчах механик йурăхлă çын пулман—пырсанах машинă пайĕсене айакка сутса ĕçсе çуреме пуçланă. Халь ăна ирĕкçĕрех ĕçрен кăларса пусе тăнă.

Комбайнсемпе ĕçлеме горючисем те нумай çитмеççĕ. Халь пĕтĕмпе 35 тоннă кÿрсе килнĕ. Вăл 3—4 кун çеç ĕçлеме çитет. Пĕтĕмпе 600 тоннăна йахăн кирлĕ. Анчах та Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ нарйад памасăр тăрат.

Сăкăтри „Хĕрлĕ йалав" колхоз уй ĕçне пачах хатĕрленмен. Кăçал колхозăн пурĕ 1.180 гектар вырса кĕртмеле. Халь кунта 7 жнейкăран пĕрне те йусаман. Иртнĕ çулхи тырра халь çеç çапса пĕтернĕ, çавăнпа итемсене те тасатса хуман. Кунта çумкурăксене çумлас ĕç те пит йапăх. 6-мĕш бригадăн (бригадирĕ П. Шестов йул.) 4,6 гектар йасмăк калчи пĕтĕмпех çумкурăк айне пулса ларнă. Халь унта 9 çын çеç ĕçлет. Колхозра 5 коммунис, 4 çын сочувствуйушчи. Вĕсем тырпулсене пуçтарса кĕртме хатĕрленес ĕçре йертсе пымаççĕ. Тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленесси çинчен йышăннă постановлени çинчен халь те сÿтсе-йавман.

Çавăн пекех Алманчăкри Ленин йачĕпе тăракан колхоз тата „Канаш"-па „Çăлтăр" колхозсем те уй ĕçне йапăх хатĕрленеççĕ.

Йелчĕк районĕн делегацийĕ ытти колхозсем йачĕпе те чылай çитменлĕхсем палăртса, вĕсене йепле пĕтерсе пымали майсене кăтартса хăварчĕ.

Ник. Пушкин.

Çилос хывма халех тытăнмала

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сарса пырассинче кирлĕрен те кирлĕ услови—вăл выльăх апатне çителĕклĕ тăвассишĕн кĕрешни пулаť. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти ийулĕн 1-мĕшĕнче „Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели 1938 çулхи государствă планĕ çинчен" йышăннă постановлени выльăх апачĕ хатĕрлес ыйтăва кăçал пит пысăк вырăна лартаť. Уйрăмăнах çилос хатĕрлемели плана пысăк палăртнă—республикипе пурĕ 120.000 тоннă хатĕрлемеле. Вăтам шутпа вăл кашни колхозра кăçал 70 тоннă ытларах çилос хывмалине пĕлтерет.

Çапла ĕнтĕ, çилос хатĕрлесси çине колхозсен кăçал хытă çавăрăнса пăхмала. Вăл ĕçе халех тытăнмала. Чи малтанах—пайанпа ырансенче çилос хывмали кивĕ шăтăксене тасатса хатĕрлесе çитермеле, кирлĕ пулсан çĕнĕ шăтăксем алтса хатĕрлемеле. Çакă вăл халь, тырпулсене пухса кĕрес ĕçе тухиччен, тумали ĕç.

Çавăн пекех, кашни колхозрах, çилос хывмали плана пурнăçлама халех тытăнма пулаť. Çилоса хывмали курăксем—çумкурăксем, вăрман курăкĕсем, çамрăк хăйахсем кашни колхозрах пур. Вĕсене пухса усă курмасни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хирĕçле пынипе танах шутланаť.

Йышлă выльăхшăн чăннипех тăрăшакан колхозсем çилоса хывма йурăхлă пĕр курăка та усăсăр пĕтермеççĕ. Чылай колхозсем калчасем çинчен пуçтарса кĕртнĕ çумкурăксене çилоса хываççĕ. Çĕрпÿ районĕнчи „Коминтерн" колхоз ийун уйăхĕнче уйхиртен пухса кĕртнĕ çумкурăксене пурĕ 24 тоннă çилоса хывса хăварнă.

Анчах та, çилос хатĕрлессишĕн халех тăрăшакан колхозсем пит сахал. Акă, Елĕк районĕн кăçал 6,2 пин тоннă çилос хатĕрлеме сахал мар курăксем кирлĕ пулаç çĕ. Кунта 6,2 пин тоннă курăка кĕркунне—çĕрулми лартнă лаптăкран илме шутлаççĕ пулас, мĕншĕн тесен халь нихăш колхозра та çилос хатĕрлес ĕçе йĕркелĕн тытăнман.

Çавăн пекех Вăрнар, Тутаркас, Йетĕрне районĕсенче те çилос хатĕрлес тĕлĕшпе халь нимĕнле хускану та çук-ха. Вĕсем те çĕрулми аври çине çеç шанса лараççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх апачĕшĕн, çилосшăн кам чăннипех большевикла тăрăшаť, вăл выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пулнă сиенлĕ ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерессишĕн тăрăшаť. Çавна кашни колхоз, кашни фермă руководителĕн, çĕрĕç органĕсенче ĕçлекенсен шута илсе, халех çилос хывас ĕçе тытăнмала.

М. К.

Н. И. Шелепи

Пирĕн займсем

Пирĕн зайомсем
Хамăршăн вĕсем,
Зайомпа—епĕр
Чечекленетпĕр.

Зайом: ÿстерет
Индустрине те,
Укçа хакне те
Çирĕплентерет.

Вăйлă индустри—
Паттăр хуçалăх—
Ĕçхалăхĕшĕн
Пурăнма лайăх.

Чун хавалĕпе
Йурă шăратса,
Зайомшăн епĕр
Алă çĕклетпĕр.

Тăван çĕршыва
Хĕрÿ йуратса,—
Зайомпа епĕр
Хăват илетпĕр.

Паттăр ĕççыннин
Чаплă кунçулне
Сыхласшăн—епĕр
Зайом илетпĕр.

Социалисăм
Пурлăхне, тусăм,
Зайомпа епĕр
Çирĕплететпĕр.

Шупашкар.

Çĕнĕ клуб

ÇĔРПŸ. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă кун тĕлне Каткассинчи „Стахановец" колхоз çĕнĕ клуб туса пĕтерчĕ. Клуб аслă та çутă.

Иртнĕ çулхинчен ытларах сырăнаççĕ

ТУТАРКАС (телефон тăрăх). Ийулĕн 6-мĕшне районĕпе 358 580 тенкĕлĕх зайом илме çырăннă. Чылай йалсоветсенче çĕнĕ зайома иртнĕ çулта çырăннинчен ирτерсе çырăнаççĕ. Мăн Хураçка йалĕнчи колхозниксемпе йединоличниксем иртнĕ çулхинчен 1.260 тенкĕлĕх ытларах, 10.375 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Оринина йалсоветĕнче 13.550 тенкĕлĕх çырăннă. Çак йалсоветри „Хĕрлĕ çăлтăр" колхоз колхозникĕсем иртнĕ çулта 1.180 тенкĕлĕх çырăннă пулсан, кăçал 2 260 тенкĕлĕх зайом илме çырăнчĕç.

Мăн Сĕнтĕр йалсоветĕнче çĕнĕ зайома 12 580 тенкĕлĕх çырăннă. „Ударник" колхоз колхозникĕсем 905 тенкĕлĕх çырăнса ийулĕн 6-мĕшĕччен зайомшăн 600 тенкĕ укçа тÿлерĕç. ПСК(б)П Тутаркас райкомĕнче ĕçлекен Проворăв йулташ çĕнĕ зайома 400 тенкĕлĕх çырăнса çав вăхăтрах укçине тÿлесе татрĕ.

Мăн Сĕнтĕрте зайом сарас ĕçре пуринчен те ытла колхозницă Марийă Краснова йулташ тăрăшса ĕçлет. Вăл пĕр кун хушшинчех хĕрарăмсем хушшинче 1.010 тенкĕлĕх зайом сарнă.

М. Исайĕв.

Агитатăрсем зайом çинчен ăнлантараççĕ

ПĂРАЧКАВ. Районри колхозсем хĕрсех утă çулаççĕ. Утă çулакан колхозниксем кану вăхăтне савăнăçлă ирτереççĕ. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампани вăхăтĕнче ĕçленĕ агитатăрсем колхозниксене кулленех хаçатсенчен çĕнĕ хыпарсене вуласа кăтартаççĕ. „Ударник" колхозри агитатăр, 4-мĕш бригадăн бригадирĕ Николайĕв йулташ утă çулакан колхозниксене Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайомĕ çинчен каласа ăнлантарчĕ. 4-мĕш бригадăри утă çулакан 15 колхозник çур сехет хушшинчех 750 тенкĕлĕх, колхозĕпе 2.125 тенкĕлĕх зайом илме çырăнчĕç.

Утă çулнă çĕртех Низовский йалсоветĕнчи „Советсен 6-мĕш съесĕ" колхоз колхозникĕсем 1.775 тенкĕлĕх, тата Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем 1.500 тенкĕлĕх, „Восход" колхоз колхозникĕсем 2.500 тенкĕлĕх, Пăрачкав совхозĕнче ĕçлекенсем 2.000 тенкĕлĕх зайом илме çырăнчĕç.

Районри пур вырăнта та колхозниксем мĕн ĕçре ĕçлеççĕ, çавăнта пырса çĕнĕ зайом çинчен ăнлантараççĕ. Колхозниксем çĕнĕ зайома 100 шер тенкĕлĕх тата ытларах та илме çырăнаççĕ.

* * *

ВАРМАР. Ийулĕн 4-мĕшне кăнтăрла тĕлне районĕпе 98 пин тенкĕлĕх зайом çырăннă. Спорт-инвентар хапрăкĕнче ĕçлекенсем çĕнĕ зайома 28.090 тенкĕлĕх, МТС-нче ĕçлекенсем 10.500 тенкĕлĕх çырăннă.

Зайом çырăнас ĕç район центрĕнче тата йалсенче те пысăк çĕкленÿпе пулса пыраť.

Колхозсем утă çулма тухрĕç

Пирĕн республикăри Улатăр, Кувакинă, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Турхан, Шăмăршă, Вăрмар, Трак районĕсенчи колхозсем утă çулма тухрĕç. Ийулĕн 1-мĕшне республикĕпе 62 пин гектартан 2.395 гектар çинче утă çулнă. Кувакинă районĕн кăçал 1.800 гектар çинчен çаран утти çулса пуçтарса кĕмеле. Ийулĕн 1-мĕшне ку районра пурĕ 1.170 гектар çулнă.

Улатăр районĕнчи „Октябĕр çĕнтерĕвĕ" колхозра утă çулас ĕç хĕрÿлĕн пыраť. Утă çулакансем Г. Додонăв, А. Душенкăв йулташсем хăйсен нормисене 200 шер процент тултарса пыраççĕ. Çавнашкалах В. Цапайĕв. И. Додонăв йулташсем утă çулас ĕçре стахановла ĕçлесе пыраççĕ.

Трак районĕнчи колхозсем те хĕрсех утă çулаççĕ. Ийулĕн 3-мĕшне Каганович йачĕпе тăракан колхозра 9 гектар, „Атăл" колхозра 4 гектар çулнă. „Çĕнĕ тĕнче" колхоз членĕсем те утă çулма тухрĕç.

Тырă хумали ампарсене тасатас пулаť

ТОССИНКАССИНЧИ (Шупашкар р.) „Ударник" колхоз тырпулсене çумкурăксенчен таса тытса тăрассипе начар ĕçлерĕ. Çуртрисене çумкурăксем пусса илнĕ. Çавăн пекех тырпулсене пуçтарса кĕме те йапăх хатĕрленеççĕ. Пайанхи куна та тырпулсене пухса кĕмелĕç планĕ туман. Колхозра икĕ бригадă. Вĕсем валльи пĕр витнĕ итем, пĕр сушилкă çеç. Анчах вĕсем те йусавсăр, ĕçлеме йурăхсăра тухнă.

Тырпулсене сийенлекен сăвăссемпе çине тăрса кĕрешмеле. Анчах „Ударник" колхозра çĕнĕ тырра дезинфекци туман ампарсене хума шутлаççĕ. Çакăн пек сийенлĕ шухăша пĕтерес пулаť, ампарсемпе складсене тасатса дезинфекцилемеле. Тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленессипе çине тăрса ĕçлемеле.

Г. Тимофейĕв.

Малта пыракан колхоз

Кив Тутайкассинчи „Кунер" колхоз (Сĕнтĕрвăрри р.) государствăна аш-какай тăратмали обйазательствăна кашни çулах срукра тултарса пыраť. Колхоз кăçалхи плана та 100 проценчĕпех тултарчĕ. Кунсăр пуçне государствăна 23 центнер аш-какай сутрĕ. Çавăншăн райсойуз колхоза автомашинă пачĕ.

Пр. С.

Туркмени ССР Верховнăй Совечĕн суйлавĕ (1938 çулти ийунĕн 24-мĕшĕ).

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Геокчински суйлав округĕнчи 13-мĕш суйлав участкинче. Орденоносец Ана Курбан Чкатов бÿллетене суйлав йешчĕкне йараť. Унпа йунашар—Калинин йачĕпе тăракан колхоз председателĕ Аман Мамед Овез. Сулахайра—участокри суйлав комиссии председателĕ Хал—Нияр Айлиев.

Д. Фавилович фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

М. И. КАЛИНИН

Советăн тинĕс çинчи пысăк флочĕшĕн*)

Йулташсем, Российăри тинĕс флочĕн строителствинче сирĕн савăт нумай çулсем хушши йертсе пыракан предприйати пулнă. Тÿрех калас пулаť: революци хыççăнхи çулсенче нумайах пулмасť иртнĕ вăхăта çитиччenех карапсен строителствинче пирĕн чи сахалрах çитĕнÿсем пулнă. Йулашки çирĕм çул хушшинче судостроителсем нимĕн те туман тесе калассăн мар епĕ,—ку вăл пачах тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Анчах промышлĕннăçăн ытти отраслисем çине çĕршыв ытларах çавăрăнса пăхнă, вĕсем валльи укçа-тенкĕ ытларах панă.

Ку вăл мĕншĕн çавăн пек пулнă-ха? Малтанах çĕр çинчи çара хĕçпăшаллантармала пулнă, чукунçулсене йусамала пулнă, уйхирсене трактăрсем нумай памала пулнă, машиностройенине, йалхуçалăх тата промышлĕннăç техникине вăйлатмала пулнă. Паллах ĕнтĕ тинĕс флочĕ тунă çĕре пысăк укçа-тенкĕ пама епĕр вăл вăхăтра вăй çитереймен. Сталинла пилĕкçуллăхсенче епĕр хамăрăн промышлĕннăçа çĕклерĕмĕр, халь ĕнтĕ епĕр тĕнчере чи вăйлă промышлĕннăçлă çĕршывсенчен пĕри пулса тăратпăр. Епĕр çав вăхăт хушшинче авиаци промышлĕннăçĕ турăмăр, автомобил тата трактăр промышлĕннăçне хăпартрăмăр, артиллери ĕçне чылай вăйлатрăмăр. Шултра карапсен строителствинче вара епĕр сутă-илÿ карапĕсем çеç турăмăр, çак строителствăна та ытла нумай вăйах хумарăмăр.

Халь ĕнтĕ пирĕн карапсен строителствине пысăккăн çĕклес пулаť. Епĕр тинĕс çинчи пысăк флот строителствине тума тытăнатпăр.

Халь ĕнтĕ пирĕн судостроителсен кивĕлле пурăнма йурамасť. Халь ĕнтĕ тĕнчере карапсем тăвас ĕçре малти вырăна тухăр.

Пĕтĕм тĕнчере хăйар кĕрешÿ пыраť. Паллах, вăл кĕрешĕве епĕр мар пуçласа йатăмăр. Епĕр пĕртте хĕçпăшалланасшăн тăмастпăр. Анчах вырăсен ваттисем: кашкăрсемпе пурăнас пулсан, кашкăрла улас пулаť,—тесе каланă. Пирĕн йĕри-тавра капиталисăмлă çĕршывсем тăраççĕ, вĕсем пурте хĕçпăшалланаççĕ. Çав хăшпĕр çĕршывсен пуçлăхĕсем пирĕн çĕршыва çаратас ĕмĕтпе ăшаланса вĕчеленеççĕ. А пирĕн мĕне хÿтлемели пур! (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Епĕр материаллă пурнăç йенчен те, техникă йенчен те, культура тĕлĕшпе те пысăккăн ÿсрĕмĕр, халь епĕр пысăк флот строителствине тытăнма пултаратпăр ĕнтĕ. Карапсен строителствинче хăш савăт йертсе пыракан савăт пулмала? Малта пыракан çĕнĕ техникăлă тата пысăк тоннажлă карапсем тунă çĕрте йертсе пыракан савăт — Орджоникидзе йачĕпе тăракан савăт пулаť, тесе шутлатăп епĕ. (Алă çупаççĕ). Сирĕн савăта исори совет карапĕсене тăвас ĕçре йертсе пыракан вырăн йышăнма пурĕ. Мускаври Сталин йачĕпе тăракан савăт йе Горькинчи Молăтăв йачĕпе тăракан савăт автомобил строителствинче мĕнле вырăн йышăнса тăраççĕ, сирĕн савăтăн та карапсен строителствинче çавăн пек вырăнах йышăнмала. (Алă çупаççĕ) Алă çупатăр-и йе çук-и, — анчах есĕр çав вырăна йе йышăнаттăр, йе кайа тăрса йулаттăр, вара йертсе пыракан вырăна урăххисем, карапсем тăвас ĕçре кивĕ хисеплĕ истори çук çамрăкрах савăтсем йышăнĕç. Есĕр малти вырăншăн çапăçмасан, çак вăл пулма та пултараť.

Кунта: иртнĕ çулта пирĕн савăт йапăх ĕçленĕ,—тесе каларĕç. Савăтра сăтăрçăсем, халăх тăшманĕсем хуçаланса пурăннă. Есĕр хăвăр савăта вĕсенчен тасатни лайăх вăл. Анчах мана тухса калаçакан хăшпĕр йулташсен пĕр йапала кăмăла каймасť: мĕн пур çитменлĕхсене сăтăрçăсем çине йавантарасшăн. Капла тума йурамасť, тесе шутлатăп епĕ, йулташсем. Тепĕр чух есĕр çапла калăр, вара лайăхрах пулĕ: пирĕн ĕç йапăх пыраť; унта сăтăрçăсем хăйсене кăтартрĕç тата епĕр те йапăххрах ĕçлерĕмĕр. (Кулаççĕ, алă çупаççĕ).

Есĕр мана: пирĕн мăстерскойсенчен кăштах кивĕ шăршă кĕрет, çавăн пек оборудованипе сасартăках малала сикме йавăр, тесе калăр. Анчах пăхăр-ха Англири карапсем тăвакан савăтсем çине. Пирĕн йут çĕршывсенчи работниксенчен пĕри нумайах та пулмасť ман патра пулчĕ; Англире чухне, вăл Англии карапсем тăвакан авалхи фирмисенчен пĕрин савăтне кайса курнă. Унăн сăмахĕсем тăрăх, çав савăтри оборудовани питĕ кивĕскер тата чи начарскер, анчах рабочисем кашни çулах пит пахă карапсем туса кăлараççĕ. Çав фирмăна туни 250 çул çитет ĕнтĕ, унта рабочисен пилĕк-ултă ăру ĕçлет; професси пĕр ăруран тепĕр ăрува куçса пыраť. Паллах, фирми рабочи искусствипе, унăн опычĕпе пурăнаť.

Паллах, пирĕн те савăтсенче ĕç вăйĕ улшăнмасăр тăмала тăвас пулаť. Анчах, пилĕк ăру хыççăн епĕр те лайăх ĕçлеме пуçлăпăр, текен шухăшпа лăпланса ларма пултаратпăр-и епĕр? (Кулаççĕ). Çавăн пек нумай кĕтме пултаратпăр-и епĕр, çавăн пек нумай кĕтме совет влаçĕ пултарат-и? Паллах—пултараймасť. Пирĕн урăххипе çĕнтерсе илес пулаť. Англире карап тăвакансем ĕмĕрсем хушши вĕренсе пынипе илеççĕ пулсан, пирĕн вара динамикăлă пулнипе илмеле. Епĕр—çамрăк совет çĕршывĕ. Пирĕн пуçарулăхпа илес пулаť, пирĕн творчĕствăлă вăйсемпе илес пулаť. Йулашкинчен, пирĕн кучуххехи çĕнĕ оборудованипе илес пулаť.

Хальхи тапхăрта инженерсен, техниксен, мăстăрсен, профессионал-рабочисен хăйсен умне—карапсем тăвас ĕçре пахалăх йенчен ватă Англине хăваласа çитсе иртсе кайас задачă лартас пулаť, тесе шухăшлатăп епĕ. Епĕ тÿрех калатăп: карапсем тăвас ĕçре ку тăранччен Англине никам та хăваласа çитсе иртсе кайман-ха. Пирĕн ăна хăваласа çитсе иртсе кайас пулаť! (Алă çупаççĕ). Англи—чи вăйлă капиталисăмлă çĕршывсенчен пĕри, а епĕр чи вăйлă социалисăмлă çĕршыв! (Алă çупаççĕ).

Епĕр Америкă техникинчен нумай илетпĕр. Карапсем тăвас йенĕпе есĕр те Америкăран мĕн те пулин илеттĕр пулĕ, тесе шутлатăп. Епĕр культурăпа, пĕлÿсемпе, техникăпа илме тивĕç.

Советăн тинĕсри пысăк флот строителствинче инженерлă-техникăлă работниксем йертсе пыракан вырăн йышăнса тăраççĕ. Инженерлă-техникăлă работниксемсĕр, вĕсем пысăк вăй хурса тăрăшмасăр епĕр çак проблемăна татса параймастпăр. Карапсем тăвакан пирĕн савăтсенчи инженерсен составĕн питех те питех сирĕп ĕçлес пулаť. Мана çакăн пек туйăнаť: еп карапсем тăвакан инженер пулас пулсан, епĕ хальхи вăхăтра ыйхă килменнипе аптранă пулăттăм. (Кулаççĕ). Хăвăрах шухăшласа пăхăр: инженерлă-техникăлă работниксен карапăн пройекчĕпе чертежĕсене тумала кăна мар, тата технологи процесне те палăртса памала. Ку вăл акă мĕне пĕлтерет: пишер рабочисене ĕçе пĕлсе вырнаçтарса тухмала, çапла туни карапа тата унăн мĕн пур механисăмĕсене тунă чухне чи усăлă резултатсем паťăр. Çак—пысăк та ответлă ĕç. Карап тумали пройект хатĕрлекен çынсен пĕлÿсем пысăк, творчĕствăлă пултарулăхсем пысăк пулмала; вĕсен карап тăвакан çамрăк рабочисене воспитани памала, вĕсене рабочисен малта пыракан тата дисциплинăлă профессионаллă ушкăнĕ тумала.

Асра тытас пулаť, советăн тинĕс çинчи пысăк флотне тăвас задачăна парти, правителствă лартнă. Партире тăракан тата партире тăман большевиксем хăйсен умне кирек мĕнле задачă лартаççĕ пулсан, вĕсем хăйсен вăйĕсене хĕрхенсе тămaççĕ, анчах задачăна пурнăça кĕртеççĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ)

Епĕ сире сывлăх сунса саламласшăн, йулташсем. Сирĕн çине халь хи вăхăтра пĕтĕм çĕршыв пăхса тăраť. Есĕр хăш вăхăтĕнче пĕрремĕш ЗИС автомобиле çерпле йĕркепе туса кăларма пуçласси çинчен шухăшланă пулĕ. Пирĕн автомобилсем тăвасси малтан мĕнле пулнă, есĕр те хальхи вăхăтра савăн пек лару-тăрурах пурăнаттăр.

Мĕнле задачăсем тăраççĕ-ха сирĕн умра?

1. Хăвăрт тăвас пулаť: пысăк тинĕс-çар флотне тăвас задачă кĕтмест, сирĕн карапсем тăван çĕршыва хăçан кирлĕ пулассине никам та тĕрĕссипе пĕлмест.

2. Йÿнĕпе тăвас пулаť: пысăк карап тума калама çук нумай укçа-тенкĕ кирлĕ, пĕчиккĕн перекетленийĕх çĕршывшăн пысăк вырăн йышăнса тăраť.

3. Лайăх тăвас пулаť: пирĕн карапсем тĕнчере чи лайăххисем пулмала. Пирĕн морйаксен пурнăçĕ çакăнтан килет.

Çаксем—çăмăл задачăсем мар. Есĕр чи вăйлă капиталисăмлă державăсемпе, карапсем тăвас тĕлĕшĕнчи чи вăйлă работниксемпе ăмăртăва тухаттăр. Англи, Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем, Йапони, Франци, Германи, Итали—кашни пысăк державă хăйĕн тинĕс флочĕ çине пысăккăн çавăрăнса пăхнă. Пирĕн çав çĕршывсене хăваласа çитсе иртсе каймала.

Сирĕн савăт тĕнчери малта пыракан савăтсенчен пĕри пулмала, унсăрăн мана та—сирĕн РСФСР Верховнăй Советĕнчи депутата—намăс пулаť. Епĕ сывах пулсан, есĕр хăвăрăн задачăсене мĕнле пурнăça кĕртсе пынине курма тепĕр темиçе çултан епĕ сирĕн савăта обйазателлă килетĕп. (Алă çупаççĕ). Епĕ килни, епĕ сирĕнпе калаçни сире пысăкрах творчĕствăлă çĕкленÿ тума пулăшсан,—епĕ вара парти умĕнче, правителствă умĕнче, Сталин йулташ умĕнче хамăн задачăна пурнăça кĕртрĕм, тесе шутлăттăм. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Мĕнле, йулташсем, йураť-и сирĕн çине шанма? (Пурте пĕр харăс: „Йураť!" тесе кăшкăраççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. Тăвăллă оваци, „ура" кăшкăраççĕ).

*) Ленинградри Орджоникидзе йачĕпе тăракан савăтри рабочисем, инженерлă-техникăлă работниксем тата служащисем умĕнче 1938 çулхи ийунĕн 11-мĕшĕнче каланă сăмахĕ.

ПАРТИ ПУРНӐÇӖ

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗнче

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗ Вӑрнар фосфорит савӑтӗнче партилӗ-массӑлӑ ӗçсем мӗнле тӑни çинчен Вӑрнар райком секретарӗ Топриков тата парторг Йегорӑв йулташсен доклачӗсене итленӗ. Обком хӑйӗн решенийӗнче Вӑрнар фосфорит савӑтӗнче партилӗ-политикӑлӑ ӗç çителӗксӗр тӑнине палӑртат. Парти пухӑвӗсем вӑхӑтра пулмаççӗ, вӗсем коммуниссене воспитани паракан майсенчен пӗри пулса тӑрайман. Лайӑх ӗçлекен рабочи стахановцӑсемпе инженерлӑ-техникӑлӑ работниксене партине хутшӑнтарас тӗлӗшпе ӗçсем пуçӗпех çителӗксӗр. Рудниксенче ӗçлекен рабочисем хушшинче массӑлӑ агитаци ӗçне начар туса пыраççӗ. Вӑрнар райкомӗ фосфорит савӑтӗнчи пуçламӗш парторганизацине оперативлӑ йертсе пымасть.

Обком Вӑрнар райкомӗпе парторг Йегорӑв йулташа çак кӑтартнӑ çитменлӗхсене пӗтерме, сӑтӑрла ӗçсен йулашкисене кӗске вӑхӑтра пӗтерме савӑтри коммуниссемпе рабочисен пӗтӗм коллективне мобилизацилеме, рабочисем хушшинче стахановла йухӑма вӑйлатса йама, большевикла сыхӑлӑха ӳстерме, халӑх тӑшманӗсене пӗрмайах тӑрӑ шыв çине кӑларса пыма, çакӑн тӑрӑх—1938 çулти производствӑ планне вӑхӑтра тултармала тума хушнӑ.

Обком пуçламӗш парторганизаци ӗçне çапла организацилеме хушнӑ: парти пухӑвӗсене йӗркелӗ, вӑхӑтра иртермеле, пухӑсене малтан тӗплӗн хатӗрленмеле. Çавӑнпа та пуху хӑçан, хӑш вӑхӑтра, ӑçта, мӗнле ыйтусем тӑрӑх пуласси çинчен коммуниссене малтанах тӗплӗн пӗлтерсе хумала. Коммуниссене пухура пӑхса тухмали ыйтусен материалӗсемпе паллаштарма тӑрӑшмала.

Парти членӗсемпе кандидатсене пурне те партин активлӑ ӗçне хутшӑнтармала, коммуниссене уйрӑм порученисем памала, хушнӑ ӗçсене пурнӑçа мӗнле кӗртнине тӗрӗслесе тӑмала, парти дисциплинине вӑйлатса пымала.

Рабочисене инженерлӑ техникӑлӑ работниксене сочувствуйушчисен ушкӑнне ытларах илмеле, сочувствуйушчисене пурне те практикӑлӑ активлӑ ӗçе хутшӑнтармала.

Рабочисем, служащисем, инженерлӑ-техникӑлӑ работниксем хушшинче партилӗ массӑлӑ ӗçе вӑйлатса йани тӑрӑх, производствӑра тӗрӗсленнӗ, лайӑх ӗçлекен стахановецсемпе инженерлӑ техникӑлӑ работниксене партине илмеле.

Коммуниссем хӑйсен пӗлӗвне хӑпартас тӗлӗшпе ӗçленине куллен кун тӗрӗслесе тӑмала.

Агитатӑрсемпе политвулавçӑсене парторгӑн хӑйӗн йертсе пымала, доклада, калаçусем иртерме хатӗрленес ыйтусем тӑрӑх вӗсемпе тӑтӑшах семинар иртермеле, вӗсене кирлӗ пособисем тупса памала (хаçатсем, журналсем, диаграмсем). Общежитисенче, рудниксенче, рабочисен хватерӗсенче хаçатсем вуласа памала, калаçусем иртермеле.

ПСК(б)П Обкомӗ ПСК(б)П Вӑрнар райкомне фосфорит савӑтӗнчи пуçламӗш парторганизацине оперативлӑ йертсе пыма хушнӑ. Пуçламӗш парторганизаци парти пухӑвӗсемпе çӳлти органӗсен решенисене пурнӑçа мӗнле кӗртнине тӗрӗслесех тӑмала. Парткабинет çумӗнче фосфорит савӑтӗнче ӗçлекен агитатӑрсем, вулавçӑсем, калаçу иртерекенсем валли консультаци организацилемеле.

Çавӑн пекех Обком райкома пуçламӗш парторганизацинче парти хуçалӑхӗ мӗнле тӑнине тӗрӗслесе тухма, парти хуçалӑхне йӗркене кӳртес ӗçре пулӑшма хушнӑ.

Пайанран ырана...

Чӑваш АСС Республикӗнчи Çутӗç Халӑх Комиссариачӗ çумӗнчи пуçламӗш парторганизаци 1936 çултанпа пайанхи куна çитиччен пӗр çынна та парти ретне илмен. Çак факт вӑл—парторганизаци парти ӳсӗмӗшӗн ответлӑха çухатни çинчен калать.

Организацинче мӗн пурӗ 12 коммунис. Вӗсем ӗçлеме пултараççӗ. Анчах партире тӑман работниксем хушшинче большевикла воспитани парас ӗçе организацилемен. Ӗçлекен кадрсем çине тивӗçлипе çаврӑнса пӑхмаççӗ.

Çутӗç Халӑх Комиссариатӗнчи комсомолӑн пуçламӗш организацийӗнче 33 комсомолӗц. Вӗсенчен парти ретне кӗме хатӗрленнисем пур. Анчах рекомендаци тупаймаççӗ. Рекомендаци тупнӑ комсомолӗцсене партине илесси те тӗрлӗ сӑлтавсемпе тӑсӑлса пырать. Николайӗвпа Смирнов комсомолӗцсем тахçанах зайавлени панӑ. Ийунӗн 23-мӗшӗнче парти пухӑвӗнче вӗсен зайавленисене пӑхса тухмала пулнӑ. Пухӑва пурте пуçтарӑннӑ. Анчах рекомендаци паракан Шашков коммунис пухӑва пыман пирки, зайавленисене пӑхса тухасси тепӗр пухуччен йулнӑ...

...Çапла пухуран пухӑва, пайанран-ырана пӗр вӗçӗмсӗр малала шӑвӑнаççӗ кунсем... Парти ретне илме ыйтса панӑ зайавленисем папкӑ хушшинче тапранмасӑр выртаççӗ.

Çутӗç Халӑх Комиссариатӗнчи парторганизацинче сочувствуйушчисем пӗр çын та çук, парти ретне те çак икӗ çул хушшинче никама та илмен. Кам айӑплӑ-ха кунта? Паллах ӗнтӗ парторг. Анчах хӑш парторг? 1937 çулхине виçӗ парторг улшӑннӑ. Унччен те çавӑн пекех. Кӑçал çӗнӗ парторг Орлов йулташ ӗçлет. Вӑл хӑйне çӗнӗ çын тесе, парторганизаци ӗçне тӗпренех пӗлейместӗп,—тет.

Парти ретне илес ӗç çакӑн пек начар тӑни вӑл пӗтӗмпех—парторганизаци плансӑр, сӳрӗккӗн ӗçлесе пынинчен килнӗ. Çавӑн пекех ПСК(б)Парти Шупашкар хула комитечӗ пирки те пӗр икӗ сӑмах каламала. Мӗнле вара хула комитечӗн инструктӑрӗсем Çутӗç Халӑх Комиссариачӗ çумӗнчи парторганизаци ӗçӗ çакӑн пек начар тӑнипе килӗшеççӗ?

Н. Косойкин.

Украина ССР Верховнӑй Совечӗн суйлавӗ вӑхӑтӗнче (1938 çулти ийунӗн 26-мӗшӗ)

ӲКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: Суйлав кунӗ Кийӗвра чӳкунçул çинче ӗçлекенсен клубӗ çумӗнчи пултарулӑх кружокӗн выступленийӗ.

П. Новицки фото ӳкерчӗкӗ (Союзфото).

Комсомолӗцсен йышӗ ӳсет

ТРАК. „Пчелкино" колхозра 1937 çулта 4 çынтан комсомол организаци пӗрлешнӗ. Комсорг пулса ӗçлеме Павлӑв йулташа суйласа хӑварнӑ. Павлӑв йулташ çамрӑксене воспитани парас тӗлӗшпе ывӑнма пӗлмесӗр ӗçленипе, комсомол организаци пайанхи куна 17 çынна çитрӗ. Вӗсенчен пиллӗкӗшӗ хӗрачасем.

Комсомолӗцсем РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйлана вӑхӑтра колхозниксене суйлав саккунне ӑнлантарас тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗçлерӗç. Павлӑв комсомолӗц хут пӗлмен 30 çынна суйлав кунӗччен вулама тата çырма вӗрентрӗ. Макçимӑв комсомолӗц Осоавиахим организацине йертсе пырать. Çамрӑксем кружокра винтовкӑ чаçӗсене вӗренеççӗ тата ГТО, ПВХО нормисене параççӗ.

Ст. Филиппӑв.

Кирпӗч савӑчӗн ӗçне сыватмала

Шупашкарти кирпӗч савӑчӗ чылай вӑхӑт хушши ӗнтӗ хӑйӗн планне тултарса пыраймасть. Пӗрремӗш квартӑлти ӗçсемпе танлаштарсан иккӗмӗш квартӑлта та палӑрмалах улшӑнусем туни куранмасть. Май уйӑхӗнче савӑт государствӑна 800 пин кирпӗч парайман. Ку хисеп ийуль уйӑхӗнче татах та ӳснӗ. Çурçулхи плана савӑт хӗртнӗ кирпӗчсем кӑларса 44,1 процент çеç пурнӑçланӑ. Çапла пайанхи куна кӑçалхи сезон хушшинче 10 мӗлйун чӗркирпӗч, 7,5 мӗлйун хӗртнӗ кирпӗч туса кӑларасси хӑрушлӑх умӗнче тӑрать.

Тӳрех калас пулать, плана тултарса пыманни савӑтра çирӗп йӗрке çуккинчен, ӗç вырӑнӗсене тӗрӗс организацилеменнинчен тата кирлӗ чухлӗ ӗç хатӗрӗсем паманнинчен килет. Фактсем çавӑн çине кӑтартса параççӗ. Тӑм кӑларакан цехра тимӗр кӗреçесем, запаслӑ рельсӑсем çитмеççӗ. Рельсӑсем çитмен пирки тӑм турттарассине механизацилемен, кӑларнӑ тӑма пресс цехне лашасемпе тата вагонеткӑсемпе çеç турттараççӗ. Пресс цехӗнче те тӑм тытмали пӳлӗмсем çителӗксӗр. Çавна пула ку цехра час-часах простойсем пулаççӗ. Цехри рабочисене техникӑна вӗрентмеççӗ, çавна пула брак пулать.

Икӗ цехра çавӑн пек çитменлӗхсем пулни кирпӗч хӗртекен цеха та пысӑк чӑрмав кӳрет. Кирпӗч хӗртекен цехшӑн материалсем вӑхӑтра тӑратманни пысӑк чӑрмав. Çавӑнпа халӗ кӑмака çур хӑвӑртлӑхпа çеç ӗçлет. Вагонеткӑсен çулне туман, каçхине ӗçлемелли вырӑнсенче електричӗствӑ çути те çук.

Çав çитменлӗхсене пӗтерме майсем пур. Анчах савӑт руководстви, савӑтри организацисем ӳрӗк-сӳрӗк ӗçленине пула вӗсем халӗ те çаплипех йулаççӗ.

Савӑтра лайӑх ӗçлекен рабочи стахановецсем çук мар, вӗсем пур. Анчах савӑтри профсойуз организацийӗпе дирекци вӗсене сахал пулӑшаççӗ, вӗсен ырӑ опычӗсене ытти рабочисем хушшине сарас тесе ӗçлемеççӗ. Рабочисене социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва йавӑçтарман, пӗр рабочи те ӑмӑрту договӑрӗ туман. Производствӑлӑ канашлусем сайра хутра кӑна пулса иртеççӗ, техминимум кружокӗсем çук. Çаксене пула ӗнтӗ кӑçал савӑт 74 пин кирпӗч брак туса кӑларнӑ.

Рабочисен хушшинче культурӑлӑ-массӑлӑ ӗçе кирлӗ пек йӗркелес тесе те никам та тӑрӑшмасть. Хаçат-журналсем çителӗксӗр, калаçусем, лекцисем туса иртермеççӗ, кану кунӗсене коллективлӑ иртерессине организацилемеççӗ.

Вырӑнти промышлӗннӑç халӑх комиссариачӗн руководителӗсем кирпӗч савӑчӗ çавнашкал начар, йӗркесӗр ӗçлени çинчен лайӑх пӗлсе тӑраççӗ. Апла пулин те вӗсем ку таранччен савӑтӑн ӗçне сыватас, савӑтӑн ӗçне йӗркелесе йарас тӗлӗшпе палӑрмалӑх ӗçлемеççӗ. Вӑхӑт ӗнтӗ кирпӗч савӑтне йӗркелӗ ӗçлекен тума. Йашков.

Чӑваш орфографи правилисем пирки

Çӗнӗ орфографи правилисен проекчӗ кӑтартнӑ тӑрӑх, алфавита çӗнӗрен 6 саспалли кӗмеле. Вӑл халиччен пулнӑ çитменлӗхсене пӗтерсе пыма, урӑхла каласан, интернационаллӑ сӑмахсемпе çӗнӗрен кӗнӗ сӑмахсене тӗрӗс çырма пулӑшать. Çапах проектра çитменлӗхсем те нумай. Акӑ вӗсем:

1. Ль, нь, ть саспаллисене хыттӑн илтӗнекен сӑмахсенче, хутӑш сӑмахсенче тата хыттӑн илтӗнекен сыпӑксенче те çаплипех çыратпӑр. Анчах проектра темшӗн „калатчӗ" сӑмахра „т" саспалли çырмалла хушать. Ку тариччен шкул ачисем те „калатчӗ" тесе çырнӑ. „Калатчӗ" тесе çырни вӗсене аптраштарать.

2. Урӑх чӗлхерен кӗнӗ „ия, ие, ий" вӗçлӗ сӑмахсене йат падежӗсенче çаплах çырмала тетпӗр пулин те, урӑх чӗлхерен кӗнӗ паллӑ йачӗсенче ытти йат мар падежӗсенче „металлургия промышлӗнностӗ" тесе çырма хушать. Апла пулсан „химия промышленностӗ", „Чӑваш республикӗн Конституцийӗ" тесе калама тивет пулӗ. Вӑл пӗрре те килӗшмест.

3. Ку тарана çитиччен те чӑваш чӗлхинче „тата" сойуз умӗн чарӑну палли лартасси—лартас çукки çинчен татӑклӑн каламаççӗ. „Тата" сойуз умӗн запйатӑйа лартма кирлӗ мар. Вырӑс чӗлхинче те „и" сойуз умӗн пӗр хут тӗл пулсан лартмаççӗ. Çаксене тӑтӑ памала.

П. Иванов.

Учитӗл. Шакулӑвӑ йалӗ, Канаш р-нӗ.

30 колхозницӑ отпуск илчӗç

ÇӖРПӲ. Кӑшаркасси йалсоветӗнчи Буденнӑй йачӗпе тӑракан колхозра, йалхуçалӑх артелӗн сталинла уставӗ тӑрӑх, 30 колхозницӑ йавӑр хӗрарӑм шучӗпе икшер уйӑхлӑх отпуск илчӗç. Çитес ик-виç уйӑхран татах 10 колхозницӑна çавӑн пек отпуск памала.

Ӗçкунӗсем тӳлесе тӑрсах отпускпа усӑ курмала тунӑшӑн колхозницӑсем коммунисла партипе совет влаçне тата халӑхсен çулпуçне Сталин йулташа чӗререн тав тӑваççӗ.

А. Иванов.

Çамрӑк скрипач

ВӐРМАР. Шӑплат йалӗнчи Йакӑв Андрейӗв 12 çулта кӑна пулсан та, скрипкӑпа маçтӑр вылйама пултарать. Вӑл скрипкӑпа 30 кӗвӗ калама пӗлет.

Йакӑв Андрейӗв вӗренӳри ударник. Кӑçал Урнарти туллимар вӑтам шкулта 5-мӗш класран 6-мӗш класа „отлично" тата „хорошо" паллӑсемпе куçрӗ. Отличнӑ вӗреннӗшӗн ӑна дирекци премий пачӗ.

А. Шмельов.

ВЫРӐС ЧӖЛХИ УРЛӐ КӖНӖ ИНТЕРНАЦИОНАЛЛӐ СӐМАХСЕНЕ ÇЫРАССИ ÇИНЧЕН

Культурӑн наукӑпа-тӗпчев институчӗ тӑратнӑ орфографин çӗнӗ правилисене „Чӑваш коммунӗнче" çапса кӑларнӑранпа вара чылай вӑхӑт иртрӗ. Анчах вырӑнти работниксем ун пирки мӗн шутлани çинчен, вӑл правилӑсем çине мӗнле пӑхни çинчен хӑйсен шухӑшӗсене институтӑ çырса йама васкамаççӗ. Ку ӗнтӗ, паллах, вырӑнти работниксен айӑпӗнчен килмест, пирӗн хамӑрӑн айӑпран килет пулас. Проекта тахçанах пичетлесе, тӗплӗн сӳтсе-йавма пуçламала пулнӑ.

Ку статйара епӗр çӗнӗ правилӑсен пӗр йенӗ çинче, вырӑс чӗлхи урлӑ чӑваш чӗлхине кӗнӗ, тата малашне те кӗрсе пыракан интернационаллӑ сӑмахсене çырасси çинчен чарӑнса тӑрасшӑн.

Пирӗн проектра ун пирки çапла каланӑ:

„Вырӑс чӗлхинчен йе вырӑс чӗлхи урлӑ урӑх чӗлхерен кӗнӗ интернационаллӑ сӑмахсен тӗпне вырӑс графикипех нимӗн улӑштармасӑр çыраççӗ", тенӗ. Проект тӑрӑх вара малашне: фельетон, жюри, площадь, субьект, Харьков, Ильич, Щедрин, обязательство, вагон çырмала пулать.

Тӗрӗс-ши çапла туни? Пирӗн шутпа çапла туни хальхи тапхӑршӑн пулсан питех те вырнаçулӑ пулса тӑрать. Мӗншӗн? Акӑ мӗншӗн:

1) Вырӑс чӗлхи, вырӑс культури пӗтӗм тӗнчипе уйрӑм паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать. Мӗншӗн тесе çӗнтерӳлӗ пролетарилӗ революци ловунгӗсем пирвайхи хут аслӑ вырӑс халӑхӗн пуйан чӗлхинче йантраса кайнӑ. Çакна ӗнтӗ чӑваш халӑхӗ те (ытти вак халӑхсем пекех) питӗ лайӑх ӑнланать. Чӑваш культури те, литературӑ чӑваш чӗлхи те çав пролетарилӗ аслӑ революци пулнипе кӑна, вырӑс культури пулӑшса пынипе кӑна шӑтса тухнӑ та, çав культурӑ пулӑшса пынипе малашне пуйанланса пырать те ӗнтӗ. Чӗлхе, çав шутрах чӑваш чӗлхи те пӗр вырӑнта тӑманнине, вӑл кирек йепле чӗрӗ йапала пекех улшӑнса, малала аталанса пынине кирек кам та пӗлет. Чӗлхе пуйанланасси паллах, хальхи пурнӑçпа, социалисӑм обшчӗстви йӗркипе тачӑ çыхӑнса, ӑна пӑхӑнса тӑрать. Пурнӑç улшӑннӑ тӑрӑх, чӗлхе те улшӑнать—вӑл улшӑнӑва кӑтартакан çӗнӗ сӑмахсенчен паллах; нумайӗшӗ вырӑс сӑмахӗсемпе терминӗсем пулаççӗ.

Çав çӗнӗрен кӗрекен сӑмахсене вырӑс графикинчи пекех çырмала, мӗншӗн тесен чӑваш халӑхӗ çырнӑ пекех (çырнӑ пекрехех, тейӗпӗр еппин) халапра та вӗсемпе усӑ курать. Вара вӑл сӑмахсене пӑсса çырма нимӗнле сӑлтав та çук.

2) Шкулсенче вырӑспа чӑваш чӗлхисене вӗренес йытӑва илерха тата. Кун çинчен ӗнтӗ чылах çыркалана. Учитӗлсем пӗр сасӑпа тенӗ пек, хальхи орфографипе вӗрентме пит чӑрмантарни çинчен калаççӗ. Акӑ, сӑмахран, чӑваш чӗлхи урокӗнче „октябӗр", вырӑс чӗлхи урокӗнчех ачасене „октябрь" тесе çыртарсан, пуçӗсене пӑтраттаççӗ. Кама кирлӗ çакӑн пек пӑтрату. Вара туллимар вӑтам шкула куçсан та вырӑс чӗлхи урокӗнче чӑвашла вӗренеççӗ. Ку анекдот пек йапала, анчах анекдот мар—факт. Туллимар вӑтам шкултан вӗренсе тухакансен чылайӗшӗ вара педучилишчӑсене кӗнӗ чухне пӗр-пӗр предметпа испытанине тӑрсан „пире вырӑсла мар, чӑвашла ответлеме парӑр" тесе йӑлӑнаççӗ. Çак строкасене çыраканӑн хӑйӗн те испытанисенче ачасем вырӑсла ӑнланмин пирки вырӑс учитӗлсен ыйтӑвӗсене чӑвашла куçарса лармала пулнӑ. Кам айӑплӑ кунта? Тепле пулсан та вӗренекен ачасем мар.

3) 1933 çулта чӑваш алфавитне б, г, д, ж, з, саспаллисене кӗртнӗ. Ун чухне те хӑшӗсем „ку йапала мӗне кирлӗ", текенсем пулман теме çук. Çавӑн пек шухӑшсем, паллах ӗнтӗ, буржуаллӑ националиссен лагерӗнчен, йе вӗсем майлӑ шутлакансенчен тухса пынӑ. Вӑл тапхӑр иртсе кайнӑ, хыçа йулнӑ, вӑл улшӑнупа пурин те килӗшмеле пулнӑ. Анчах 1933 çулхи орфографи правилисем ыйтӑва çурри кӑна татса панӑ. Халӗ „ъ, э, ю, я, щ, ь" саспаллисене кӗртнӗ чухне, çӗнӗ йапаларан, çӗнӗлӗхрен хӑракан шип-шипсем каллех сиксе тухрӗç. Тӗлӗнмеле! Вӗсен хӑйсен кивелчӗк шухӑшӗсене уççӑн, пичет урла пӗлтерме шикленеççӗ, вара пирӗн института каламан сӑмах хӑварман пек вӑрçаççӗ. Çавӑн пек çынсем (ан тӗлӗнӗр!) редакцисенче те пур. Мӗнле çынсем вӗсем? Çӗнӗлӗхрен хӑракан çынсем. Ун пек геройсем çинчен сӑмах хускатсан, аслӑ Сталинӑн вӑл партин XVI съезӗнче каланӑ йулашки сӑмахӗсенчен пӗр вырӑн тӳрех аса килет. Чеховӑн „Человек в футляре" текен калавӗнчи Беликӑв çине кӑтартса, сылтӑм оппортуниссен лидерӗсем çинчен Сталин йулташ ун чухне çапла каланӑ:

„Вот эта боязнь нового, неумение подойти по новому к новым вопросам, эта тревога—„как бы чего не вышло",—эти черты человека в футляре и мешают бывшим лидерам правой оппозиции по настоящему слиться с партией".

Çӗнӗлӗхрен пирӗн хӑрамала мар, мӗншӗн тесен чӑваш алфавичӗ, чӑваш орфографийӗ те çавӑн пекех вӗçне çити татса панӑ ыйтусем мар. Кунта чылай çӗнӗлӗхсем кӗртмеле пулать...

4. Чӑваш чӗлхи тавра сӑрӑннӑ калтасем— буржуаллӑ националиссем вырӑс культури йенчен килекен çӗнӗлӗхсенчен ӗнтӗ, темрен хӑранӑ пек хӑранӑ. Çавӑнпа та, 1935 çулта чӗлхе тӗлӗшпе пулса иртнӗ конференци, вӑл буржуаллӑ националиссен аллине лекнӗ пирки кӗтнӗ результата пама пултарайман. Вӗсен, буржуаллӑ националиссен идеалӗ ӗнтӗ, чӑваш чӗлхи пӗтӗмпех хӑйне уйрӑм çепӗç, çемçе чӗлхе, ӑна вырӑсла сӑмахсемпе (вырӑсла саспаллисемпе те ӗнтӗ) варалама йурамасть тенинче пулнӑ. Чӑваш чӗлхинче пулнӑ. „йа", „йу" пурçке, мӗн тума тата „я, ю" саспаллисем кӗртме кирлӗ?—текен шип-шипсем пӗлсе-и, пӗлмесӗр-и (вӑл пурӗ пӗрех) буржуаллӑ националиссен шухӑшӗн танатинче лакӑртатса лараççӗ. Вӗсем вара есӗр чӑваш чӗлхине вырӑслататӑр, пӗтеретӗр тесе ӳпкелешме пуçлаççӗ, хӑйсен шухӑшӗсене çирӗплетес тесе Ленин сочиненисем çине тӗллесе кӑтартма пӑхаççӗ. Пӑхӑр,—теççӗ вӗсем.—Акӑ вырӑс чӗлхи тасалӑхне упрасси çинчен Ленин мӗн каланӑ:

„Русский язык мы портим. Иностранные слова употребляем без надобности, употребляем их неправильно... Не пора ли нам об'явить войну употреблению иностранных слов без надобности" (Ленин, т. 24, стр. 662).

Ку статйана епӗр те вуланӑ, анчах ӑна епӗр урӑхла ӑнланнӑ. Ленин кунта чӑваш чӗлхи çинчен мар-çке, вырӑс чӗлхи çинчен калать. Чӑваш чӗлхи вырӑс чӗлхинчен чухӑнрах пулни паллӑ мари-вара? Апла пулсан чӑваш халӑхӗ хӑй йышӑнса пыракан сӑмахсене çыру чӗлхине кӗртмеле мар-и вара? Тата Ленин йут чӗлхерен кӗрекен сӑмахсене пуçпех йышӑнмала мар темест-çке, „без надобности" йе чӑвашла каласан кирлӗ мар çӗрте анчах кӗртме хушмасть. Мӗншӗн? Мӗншӗн тесен вырӑс чӗлхи хӑй те пуйан. Унӑн пуйанлӑхӗ çителӗклӗ, çитмен çӗрте кӑна йут чӗлхе сӑмахӗсемпе усӑ курмала. Епӗр тата мӗн çинчен калатпӑр-ха? Епӗр те çавӑн çинченех калатпӑр: чӑваш сӑмахӗсем çитмен пирки йут чӗлхерен кӗрекен сӑмахсемпе усӑ курмала, вӗсене пӑтратас мар тесе вырӑс графикӗсемпе çырмала, тетпӗр. Апла тумасан тепӗр хут Ванеркке словарӗ пек каласма, çырма пуçлама тивет-çке. Кунта пӗр принцип: йе вырӑсла саспаллисем кӗртсе, вӗсемпе усӑ курса вырӑсларан кӗнӗ сӑмахсене пӑсмасӑр çаплипех çырмала, йе вырӑсларан малтан кӗртнӗ саспаллисене те пӑрахӑçласа Ванеркке кӑтартнӑ пек ак çапла çырма пуçламала:

„Кинематограф — кинематокрӑх, градус—кратӑс, гвардия—кварти, конференция—конхверентси, факультет—хаккультет, факт—хактӑ, фантазия—хантаçи, фикция—хихси (мӗн вӑл хикси?), функция—хункси, философ — хилосӑх, ртуть—ӑр тут т. ыт. те (Ванеркке, „Йут чӗлхесенчен хутшӑннӑ сӑмахсен пӗчӗк словарӗ", Чӑваш кӗнеки уйрӑмӗ, Шупашкар, 1924). Тата хальхи орфографипе „Горьки, Кльазьма, Пятилеткӑ тесе çыракан сӑмахсем Ванеркке словарӗнчен инçех кайнӑ-ши? Акӑ. ӑçта илсе пырать çӗнӗрен вырӑс саспаллисене (я, ю, щ, ъ, ь, э) чӑваш чӗлхине кӗртес мар тени.

5) Пирӗн противниксем çапла калаççӗ: алфавита „я, ю" кӗртсен пӑтрашса каймалла пулать. Ӑçта „йу" çырмала, ӑçта „ю" паллӑ мар, теççӗ. Тӗрӗс. Ку пирӗн проектӑн çитменлӗхӗ пулать, вӑл çитменлӗхе пӗтерме пур чухне те „йу", „йа" мар, „ю, я" çырмала тӑвас пулать. (Каюта, Юпа, Яку т. ыт. те). Вӑл çеç те мар, чӑваш алфавитӗнчен „ть, ль, нь" саспаллисене халех кӑларса пӑрахмала. Кирлӗ те мар вӗсем алфавитра. Епӗр пур-çук словарсене пӑхса тухрӑмӑр, унта „ть" саспаллипе пуçланакан пӗр „тыха" сӑмах анчах тупрӑмӑр (тӗрӗссипе унта урӑх хӑшпӗр „Тапук" пек сӑмахсем те тӗл пулчӗç те, анчах сӑмах вӗсем çинчен мар. Тапук тесе çырсан нимӗн те улшӑнмасть). Сӑмах вӗçӗнче „ть" вырӑнне мягкий знакпа „ть" тесе çеç çырмала. Ль буквӑ та çавӑн пекрех. „Я, ю" тата ытти çемçе усӑ сасӑсем вӗсене çемçетеççӗ. „Нь" саспаллине илсен вара, вӑл саспаллилӗ чӑваш сӑмахӗсем пӗр 10—20 сӑмахран та иртмеççӗ пулӗ. Словарте „нь" саспаллипе пуçланакан сӑмахсем тупаймарӑмӑр епӗр. Сунь, мӑкӑнь, сӑмахсене мягкий знакпа анчах çырмала. Ку çеç те мар. Тӗппипех улӑштарас, йӗркелесе çитерес тесен чӑваш чӗлхине пур чухне те „б, д, г" саспаллисене кӗртмеле. Пӗр чӑваш та „пӗтӗм" тесе каламасть—пӗдӗм" тет, „Йарапай касси" темест, „Йарабайкасси" тет, „Ункӑ шывӗ" темест „Унгӑ шывӗ", йалта мар, йалда, — тет т. ыт. те. Кунта ӗнтӗ ӑçта йанӑракан саспаллисем, ӑçта йанӑраман саспаллисем çырмалине çеç палӑртмала. Çапла тусан анчах епӗр орфографи ыйтуне татӑклӑн татса пама пултарӑпӑр.

Кун пек шухӑшсем орфографи тӗлӗшпе пулнӑ 1935 çулхи конференцире те палӑркаланӑ пулас. Анчах вӑл шухӑшсен авторӗсем пит хӑйусӑр пулнӑ.

Халӗ вӗсем ку ыйтупа мӗн шутланине пӗлместпӗр епӗр, анчах орфографипе алфавит ыйтуне тапратнӑ чухне çак шухӑш пирки йазыковедсем мӗн шутлани интереслӑ пулнӑ пулӗччӗ.

Сӑмах май çакна та каласа хӑварас пулать: пирӗн халӗ орфографин хӑшпӗр правилисем тӑрӑх пит пысӑк пӑтраштару палӑрать. Чӑвашгиз пӗр тӗрлӗ çырать, „Чӑваш коммунӗ" тепӗр тӗрле, районри хаçатсем çинчен вара калама та çук. Çак пӑтранчӑка çӗнӗ проекта йышӑнсан йепле пулсан та пӗтерессех пулать. Ку ӗнтӗ орфографи словарӗ çуккинчен, интернационаллӑ терминсене ку таранчен те çирӗплетменнинчен килет. Пирӗн институт халӗ орфографи словарне хатӗрлет, учебниксенче тӗл пулакан терминсене йӗркелеме тытӑннӑ. Вӑл терминсене правительствӑ органӗсене çирӗплеттерсе терминологи словарӗ кӑларас пулать. Вара чӑваш çырулӑхӗ нумай йӗркеленӗ.

Çак статйара хускатнӑ ыйтусене пурнӑçлани пирӗн шутпа чӑваш орфографине йӗркелес тӗлӗшпе, чӑваш чӗлхине малала аталантарас тӗлӗшпе те чылай пысӑк вырӑн йышӑнмала. Çавӑнпа та ку ыйтусемпе интересленекен йулташсене, пуринчен ытла учитӗлсене, хаçат урлӑ-и йе урӑх майпа, хӑйсен шухӑшӗсене палӑртма сӗнетпӗр.

И. Йакӑвлӗв.

Культурӑн наукӑпа тӗпчев институчӗн директӑрӗ.

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Левант фрончӗн пур участкисенче те хайар ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Пӑлхавҫӑсен наступлени тӑвас хавартлӑхе чаксах пырать. Хӗҫпӑшал йенчен республиканӗцсенчен маларах тани кӑна фашиссене наступлени тума май парать. Левант фронтӗнче республиканӗцсем хаљхи вӑхӑтра фашиссене хирӗҫ хытӑн тӑрса вӑрҫни вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа та пулманнине фашиссем хӑйсемех йышӑнаҫҫӗ.

Наступлени тума пӑлхавҫӑсене пит хакла ларать, ҫавӑнпа та вӗсене пӗчӗк территори ҫинче кӑна вӑрҫма лекет. Вӗсем пӗтӗм фронт тӑрӑх наступлени тума пултараймаҫҫӗ.

Нумайах пулмасть пӑлхавҫӑсем калама ҫук пысӑк ҫухату туса тытса илнӗ Бечи йатлӑ йал сывӑхӗнче ийулӗн 5-мӗшӗнче республиканӗцсем пӑлхавҫӑсен темиҫе атакине сирсе пӑрахнӑ, пӑлхавҫӑсем Виљйавиехӑ ҫине темиҫе хутчен атакӑланӑ пулнӑ. Фашиссен икӗ танкне стройран кӑларнӑ.

Фашиссен авиацийӗ мирлӗ хуласем ҫине бомбӑсем пӑрахма халӗ те чарӑнмасть. Барҫелонӑ сывӑхӗнчи Бадаљон хули ҫине ийулӗн 5-мӗшӗнче 150 бомбӑ пӑрахнӑ. 70 ҫурта ишӗлтерсе антарнӑ. Ҫав кунхинех Сагунто сывӑхӗнчи Лос Ваљес йатлӑ йал ҫине 100 бомбӑ пӑрахнӑ.

Республикӑлӑ Испани халӑхӗ, хӑйӗн ҫарӗ пекех, паттӑрлӑхпа хӑйулӑх кӑтартать. Сӑмахран, Сагунто хулинчи вӑрҫӑ хатӗрӗсем тӑвакан савӑтри рабочисем хула ҫине фашиссем бомбӑсем пӑрахнӑ вӑхӑтра та хӑйсен ӗҫӗсене пӑрахса тухса кайман. Фашиссем ҫав хула ҫине 200 хутчен пырса бомбӑсем пӑрахнӑ.

(ТАСС).

Францире халӑх фрончӗшӗн тӑракансен йухӑмӗ

ПАРИЖ, ийулӗн 3-мӗш. (ТАСС). Францин пӗтӗм тӗнчери тата шалти лару-тӑрӑвӗ ҫинчен сӳтсе-йавма, ҫавӑн пекех пӗрлӗх проблемине сӳтсе-йавма Францин тӗрлӗрен хулисенче выраӑсенчи коммунисла тата социалисла организацисен пӗрлехи пухӑвӗсем пулса иртни ҫинчен „Йуманите" хаҫат кашни кунах пӗлтерет. Сӑмахран, ҫавӑн пек пуху Парижӑн ҫиччӗмӗш районӗнче пулса иртнӗ. Пӗрлехи пуху йышӑннӑ резољуци халӑх фрончӗн программине пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗртме, республикӑлӑ Испани ҫинчен блокадӑна сирме, ватӑлнипе ӗҫлейми пулнӑ ӗҫсыннисене пенҫи памала тума тата пролетарилӗ партисен пӗрлӗхне хӑвӑртрах пурнӑҫа кӗртме ыйтать.

Йеврей рабочисемпе служӑшчисене ӗҫрен кӑлараҫҫӗ

ЖЕНЕВӐ, ийулӗн 3-мӗш. (ТАСС). „Нейе Цюрхер цейтунг" хаҫатӑн Венӑри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Венӑ хулинчи хапрӑксенче пуринче те национал-социалисла организацисен руководителӗсем йеврей рабочисемпе служӑшчисене пурне те халех ӗҫрен кӑларса йама инструкци илнӗ.

Ҫав распорйажени ҫинчен сут урлӑ йе административлӑ йӗркепе нимӗнле жалӑбӑ та пама йурамасть.

Суецк каналӗ ҫинче ӗҫлекен рабочисен забастовки

ЛОНДОН, ийулӗн 6-мӗш. (ТАСС). Суецк каналӗн (Вӑтаҫӗрти тинӗспе Хӗрлӗ тинӗсе пӗрлештерекен канал) сывӑхӗнчи предприйатисенчи рабочисем забастовкӑ пуҫласа йанӑ. Забастовкӑ тӑвакан рабочисем ӗҫукҫи ӳстерме тата ӗҫ условисене лайӑхлатма ыйтаҫҫӗ. Порт-Саидре забастовкӑ тӑвакансенчен пӗр пайӗ предприйатирен тухса кайма килӗшмен. Унта полици илсе пынӑ. Полиципе ҫапӑҫнӑ чухне 15 ҫын аманнӑ. Порт-Саида васкасах полицейскисен подкрепленисене йанӑ. Канал тӑрӑх пӑрахутсем йӗркелӗн ҫӳреймеҫҫӗ.

(ТАСС).

Пољшӑра тӗрмесем ҫитми пулнӑ

Пољшӑн йустици министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Пољшӑри судсем тӗрлӗрен политикӑлӑ ӗҫсемпе уголовлӑ преступленисем тӑрӑх ҫулсеренех ҫур мӗлйун пригӑвӑр йышӑнаҫҫӗ. Пољшӑра кашни уйесра тенӗ пекех тӗрме пур. Анчах айӑплисене хупса усрама вырӑн ҫитмест. 15 пин ҫынна следстви тӑвиччен хупмали тӗрмисенче тытса усраҫҫӗ.

(ТАСС).

Йут ҫӗршывсенчи хроникӑ

*** Испанин республикӑ ҫарӗнчи виҫӗ бойец тата сержант Левант фронтӗнчи йалсенчен пӗринче укҫа тултарнӑ йӗшчӗк тупнӑ, унта 250 пин пезет пулнӑ. Ҫавна вӗсем ҫийӗнчех республикӑ влаҫӗсене панӑ. Ҫак тӗслӗх вӑл республикӑ ҫарӗ мораљ тӗлӗшӗнчен ҫӳлти вырӑнта тӑнине кӑтартать.

*** Кӑҫалхи ҫул фашисла Италире тырпул иртнӗ ҫулхинчен 1 мӗлйун ҫурӑ тоннӑ сахалрах пулать. Правительствӑн ирӗксӗрех йут ҫӗршывсенчен мӗлйун тоннӑ ытла тырӑ сутӑн илмеле пулать, ҫакӑ вӑл ҫӗршывӑн финасне татах та йӑвӑрлатать.

Паллӑ стахановӗцсем вӗренӳре

Мускаври Промакадемисенче екзамӗн памалли ҫуркуннехи сессӗи пулса иртнӗ. Академисенче вӗренекен паллӑ стахановӗцсем вӗренӳре пысӑк ҫитӗнӳсем кӑтартаҫҫӗ.

Сталин йачӗпе тӑракан Пӗтӗм Сойузри Промакадеминче ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет депутачӗ, паллӑ тимӗрҫ Бусыгин йулташ екзамӗне „отлично" паллӑпа панӑ, ӑна Академине вӗренме кӗме хатӗрленмелли уйӑмран пӗрремӗш курса куҫарнӑ. Паллӑ общественница Суровцӗвӑ йулташ тата хӗрарӑмсен авточупувӗн командорӗ, газогенератӑрпа ӗҫлекен автомашинӑсен хаљ пуҫланнӑ чупуне хутшӑннӑ Волкӑвӑ йулташ та екзамӗнсенче „отлично" паллӑ илнӗ. Вӗсем иккӗшӗ те пӗрремӗш курсран иккӗмӗш курса куҫнӑ. Стахановӗцсем: Сметанин (Чернореченскри хими савӑтӗнчи маҫтӑр), Муравенко (Сталинградри трактӑрсем тӑвакан савӑтри литейщик), Нестерӑв („Электросила" савӑтри обӗр-маҫтӑр) йулташсем т. ыт. пур предметсем тӑрӑх та екзамӗн тытнӑ.

Мускаври Л. М. Каганович йачӗпе тӑракан Промакадеминче ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет депутачӗ паллӑ фрезеровщик Гудӑв йулташ Академине вӗренме кӗме хатӗрленмелли уйӑмран пӗрремӗш курса куҫнӑ, вӑл пур предметсем тӑрӑх та екзамӗне аваҫлӑн панӑ. Гудӑв йулташ хӑй малтан ӗҫленӗ предприйатипе — Орджоникидзе йачӗпе тӑракан станоксем тӑвакан савӑтпа пӗрмайах ҫыхӑнса тӑрать. Метрополитен тунӑ ҫӗрте ӗҫленӗ паллӑ работница, ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет депутачӗ Федӑрӑвӑ йулташ та вӗренӳре ӗлкӗрсе пырать. Академине вӗренме кӗме хатӗрленмелли уйӑмран пӗрремӗш курса куҫнӑ чухне вӑл екзамӗне „отлично" паллӑпа панӑ.

(ТАСС).

Тутар республикӗнчи ҫамрӑк хӗрарӑмсен сйесӗ

ХУСАН, ийулӗн 5-мӗш. (ТАСС). Хусанта Тутар республикӗнчи ҫамрӑк хӗрарӑмсен иккӗмӗш сйесӗ пулса иртнӗ. Сйес Тутар республикӗнчи ҫамрӑк хӗрарӑмсен политикӑлӑ тата производствӑлӑ пысӑк активлӑхне кӑтартса панӑ. Тутар республикӗнчи промышлӗннӑҫ предприйатисенче ӗҫлекен рабочисенчен ҫурри — хӗрарӑмсем. Ҫамрӑк хӗрарӑмсем колхоз строительствинче те активлӑн хутшӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Республикӑра 1.040 тракториcткӑ, комбайнеркӑсемпе вӗсен помошникӗсем 145. Хӗрарӑмсенчен трактӑрпа ӗҫлекен бригадӑсем пурӗ 78 тунӑ.

Комсомол речӗ те ҫамрӑк хӗрарӑмсенчен хутшӑнса пырать. Ҫак ҫулхи пӗрремӗш квартӑлта кӑна комсомола 3.000 ҫамрӑк хӗрарӑма илнӗ. Сйес делегаткисем хушшинче ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет депутачӗсем виҫӗ ҫын, РСФСР Верховнӑй Совет депутачӗсем виҫҫӗ тата республикӑн Верховнӑй Совет депутачӗсем вунӑ ҫын пулнӑ.

Сйес Сталин йулташ патне саламлӑ ҫыру йанӑ.

(ТАСС).

Партин облӑҫсенчи конференцийӗсенче

■■ Ийулӗн 5-мӗшӗнче партин Чељабинск облӑҫӗнчи организаци виҫҫӗмӗш конференцийӗ хупӑннӑ. Парти обкомӗн составне 61 член тата 13 кандидат суйласа хӑварнӑ. Обком пленумӗ обкомӑн пӗрремӗш ҫекретарне пурте пӗр сасӑпа Антонӑв йулташа суйланӑ.

■■ Ийулӗн 5-мӗшӗнче партин Оренбург облӑҫӗнчи организаци виҫҫӗмӗш конференцийӗ хупӑннӑ. Обком пленумӗн ҫӗнӗ составӗ обкомӑн пӗрремӗш ҫекретарне Дубровский йулташа суйланӑ.

■■ Партин Воронӗж облӑҫӗнчи организацин иккӗмӗш конференцийӗ хупӑннӑ. Обком пленумӗ обкомӑн пӗрремӗш ҫекретарне Никитин йулташа суйланӑ.

(ТАСС).

Тинӗс ҫинчи ҫар карапӗсем тӑвассине пӳлсе пырас тӗлӗшпе тунӑ килӗшӳ

Иртнӗ ҫулхи ийунӗн 17-мӗшӗнче Англипе ССРС хушшинче тинӗс килӗшӳне тунӑ. Икӗ ҫӗршыв та 36 пин тоннӑлӑ линкортан пысӑкрах линкорсем тӑвас мар, тесе обйазательствӑ илнӗ. Англи, Франци тата Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсем хушшинче те тата Англипе Германи хушшинче те ҫавӑн пек килӗшӳсемех тунӑ пулнӑ. Йапони ҫак килӗшӳ ҫумне хутшӑнман. Ҫавӑнпа та Англи, Франци тата Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсен правительствисем: епӗр линкорсене ирӗксӗрех йышӑннӑ виҫерен — 35.000 тоннӑран пысӑкрах тума пуҫлатпӑр, тесе каларӗҫ. Анчах та тинӗс ҫинчи ҫар карапӗсене вӗсемсӗр нумай туса тултарассине чарас тесе, ҫав государствӑсем линкорсем ваљљи ҫӗнӗ виҫе — 45 пин тоннӑ тума каласса тытӑнчӗҫ.

Совет правительстви Англи правительствин сӗнӳне ответлесе ҫак ҫӗнӗ виҫе пирки килӗшӳ панӑ.

Ийулӗн 6-мӗшӗнче Лондӑнра ҫак ыйту тӑрӑх ССРС тата Англи правительствисем хушшинче протокол ҫырса алӑ пуснӑ.

Англи, Франци тата Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсем хушшинче те, ҫавӑн пекех Англипе Германи хушшинче те ҫавӑн пек протоколсем ҫырса алӑ пуснӑ.

(ТАСС).

Канмалли кун Шупашкарти строительсен сатӗнче.
Г. Харламийӗв фото-ӳкерчӗкӗ.

КАНМАЛИ КУН

Шупашкар хулинчи ӗҫсыннисем ийулӗн 6-мӗшӗнчи канмалли куна хулари сатсенче, Атӑл леш йенче иртерчӗҫ.

Атӑл леш йенчи улӑхри вӑрмана вунӑ пин ҫын ытла каҫнӑ. Ҫанталӑк шӑрӑх тӑнӑ пирки шыва кӗрекенсем пит нумай пулчӗҫ. Атӑл хӗрринче, виҫӗ километр тӑршшинче, вӗтӗр-шакӑр ачасем те ҫитӗннисем те кунӗпех шыва кӗрсе савӑнчӗҫ. Канма пынӑ халӑх ваљљи виҫӗ ҫӗрте буфет, минераллӑ шывсем сутакан киосксем ӗҫлерӗҫ.

Хулари сатсенче те канмалли кун хаваслӑн иртрӗ. Йӑвӑҫсен сулхӑнӗнче канса ларма патефонсемпе тухнӑ.

Государствӑ филармонийӗ каҫхине Крупскайа йачӗпе тӑракан сатра концерт лартса пачӗ.

Сасӑлӑ кинокартинӑсем йалсенче

Хаљ ӗнтӗ сасӑлӑ кинокартинӑсем йалсӑн ҫӗнӗ йапала мар. Совет кинематографин чаплӑ произведенийӗсене — „Ленин в Октябре", „Петр I", „Балтийцы", „За советскую родину" т. ыт. сасӑлӑ кинофиљмсене Чӑваш республикӗнчи вуншар пин колхозниксем йалтан хулана каймасӑр курса савӑнма пултараҫҫӗ.

Пирӗн хаҫата вулакансем ҫапла пӗлтереҫҫӗ:

●● СЕНТЕРВӐРРИ. Ийунӗн 27-шӗнче каҫхине Ӗсмӗлре „За советскую родину" йатлӑ сасӑлӑ фиљм кӑтартрӗҫ. Кино курма виҫӗ йалтан халӑх пуҫтарӑннӑ. Колхозниксем кинона ҫав терӗ йуратса пӑхрӗҫ.

Г. Маҫтанков.

●● ҪӖРПӲ. Ийулӗн 2-мӗшӗнче Кӑшаркассинчи „Пионер" колхоз клубӗнче „Ленин в Октябре" йатлӑ сасӑлӑ фиљм кӑтартрӗҫ. Екран ҫинче Владимир Илйич Ленина курсан, колхозниксем ура ҫине тӑрса тӑвӑллӑн чаплӑ ҫупса саламларӗҫ. Кино курма 600 ҫын пынӑ. Ҫак картинӑнах чукунҫул ҫинче ӗҫлекен рабочисене кӑтартрӗҫ. Ҫитес кунсенче Ҫӗрпӳ районӗнчи колхозсем тӑрӑх „Петр I" фиљм кӑтартса ҫӳреме пуҫлаҫҫӗ.

А. Иванов.

●● Ҫак кунсенче Пысӑк Чӑрӑш йалсоветӗнче (Ҫӗрпӳ р) „Ленин в Октябре" кино кӑтартрӗҫ. Курма тӑвата йалтан колхозниксем пычӗҫ.

Н. Мефодйӗв.

Сӗнтӗрвӑрринче квас тупса ӗҫме ҫук

Ҫанталӑк шӑрӑх тӑрать. Ҫакӑн пек вӑхӑтра пӗр стакан квас йе сӑра тупса ӗҫсен пӗтӗм ӑшчик уҫӑлса кайать. Анчах Сӗнтӗрвӑрри хулинчи суту-илӳ организацисем шӑрӑх ҫанталӑк пулассине... плана кӗртмен пулмала. Акӑ, ийулӗн 2-мӗшӗнче хулара сӑра, квас, морс т. ыт. ӗҫмели ниҫта та пӗр тумлам сутмарӗҫ.

Пр. Сатур.

Колхоз икӗ арман тытать

ҪӖРПӲ. Буденный йачӗпе тӑракан колхоз икӗ арман тытать. Пӗрине — ҫӑм тапакан армана — кӑҫал туса лартрӗ. Хаљ ҫӑм арманӗ ӗҫлеме тытӑнчӗ. Кунта ҫӑм таптарма ытти колхозсенчен те килеҫҫӗ. Ҫӑм арманӗпе тырӑ авӑртмалли армантан кӑҫал колхоз 30.000 тенкӗ тупӑш илнӗ.

А. Иванов.

Футбол

Горький командин икӗ ҫӗнтерӗвӗ

Ийулӗн 5—6-мӗшӗсенче „Темп" обществин стадионӗнче футбол вӑййин интереслӗ матчӗсем пулчӗҫ. Ийулӗн 5 мӗшӗнче Горькири Хӗрлӗ Ҫар сурчӗн командипе Шупашкарти „Спартак" команди вылљарӗҫ. Сӑмах та ҫук, Горький команди Шупашкартинчен нумай малта тӑрать. Нападенири пйатеркӑ, сулахай тата сылтӑм йенче чупакансем, защита — пурте пӗр-пӗрипе килӗшӳлӗ вылљарӗҫ. Малтанхи таймра Хӗрлӗ Ҫар сурчӗн команди „Спартак" алӑкне 2 мечкӑ тапса кӗртрӗ. Иккӗмӗш таймра хӑнасем тата ҫине тӑрса вылљаса, шупашкарсен алӑкне 4 мечкӑ кӗртрӗҫ. Вӑл кун вӑйӑ 6:0 шутпа Горький команди ҫӗнтерипе пӗтрӗ.

Ийулӗн 6-мӗшӗнче Горький команди Шупашкарти „Спартак" тата „Буревестник" обществисен сборнӑй командипе вылљарӗ. Вӑйӑра 6:1 шутпа Горький команди ҫӗнтерчӗ.

Шӑрӑх ҫанталӑк

Ийулӗн 3-мӗшӗнчепе Шупашкарта халиччен пулман шӑрӑх ҫанталӑк тӑрать. Ийулӗн 6-мӗшӗнче вӑтам температурӑ 26,2 градус ӑшӑ пулнӑ. Хӗвел питӗнче 35,2 градус ӑшӑ тӑнӑ.

Ответлӑ редактӑр Н. Н. СЕМЕНАВ.

ЧӐВАШСЕН
ПӖРРЕМӖШ КОЛХОЗ ТЕАТРӖН
ГОСТРОЛӖСЕМ
Шупашкарти академи театрӗнче
Ийулӗн 8-мӗшӗнче
Авторӗ Николай Виртӑ.
ЗЕМЛЯ
„Одиночество" роман тӑрӑх йӗркеленӗ 5 пайлӑ 6 картинӑлӑ трагеди
Ийулӗн 9-мӗшӗнче
Авторӗ Бил-Белоцерковский.
ПОГРАНИЧНИКИ
5 пайлӑ 8 картинӑлӑ спектаљ.
Ийулӗн 10-мӗшӗнче
КОНЦЕРТ
Икӗ пайлӑ.
Дирекци.

ЧАССР ХАЛӐХ КОМИССАРӖСЕН СОВЕЧӖ ҪУМӖНЧИ ҪУЛЙӖР УПРАВЛЕНИЙӖ
МАШИНИСТКӐ тата СЧЕТОВОД-КАССИР кирлӗ
Ӗҫукҫи госнормировани тӑрӑх; пурӑнма пӳлӗм пулать.
Ҫулйӗр управлени Тел. № 1—88.

Чӑвашгиза йалана ӗҫе кирлӗ
икӗ бухгалтӗр
Пымалли адрес: Шупашкар хули, Пичет сурчӗ, 4 мӗш хутлӑх, тел. № 0—51 3—1

Хутпӗлменлӗхе пӗтерес ӗҫ — халӑх ӗҫӗ

Парти Тӗпкомӗпе ССР Сойуз Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ „Хут пӗлменнисемпе хут сахал пӗлекенсене вӗрентесси ҫинчен" йышӑннӑ постановлени тухнӑранпа икӗ ҫул ҫурӑ иртрӗ, анчах ҫапах та пирӗн Чӑваш республикинче ҫитӗннисене вӗрентес тӗлӗшпе тивӗҫлине тӑвайман-ха.

Кӑҫалхи йанварӗн 1-мӗшӗ тӗлне пирӗн республикӑра хут пӗлменнисем 22.760 ҫын пулнӑ. Вӗсенчен, Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗн сводкисем тӑрӑх, кӑҫал 13.449 ҫын вӗреннӗ, анчах вӗренме ҫӳренисенчен ийунӗн 1-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпе те 4.700 ҫын ҫеҫ вӗренсе тухса, хут сахал пӗлекенсен ушкӑнне куҫнӑ.

Паллах, малала та кун пек утӑмсемпе утсан, хутпӗлменлӗхе пӗтерес ӗҫ тата нумай ҫула тӑсӑлса пыма пултарать.

Ҫавӑн пекех хут сахал пӗлекенсене вӗрентес ӗҫе те республикӑра начар йӗркеленӗ. 1938 ҫулхи планпа хут сахал пӗлекенсене 20.000 ҫын вӗрентме пӑхнӑ, анчах ийунӗн 1-мӗшӗ тӗлне вӗсенчен пӗтӗмпе те 6.634 ҫын кӑна вӗрентсе кӑларнӑ.

Районсем тӑрӑх илсен, ҫитӗннисене вӗрентес ӗҫре Елӗк, Вӑрнар, Ҫӗмӗрле, Шӑнкӑртам, Трак, Пӑрачкав, Сӗнтӗрвӑрри, Хӗрлӗ Чутай, Ишлей районӗсем уйрӑмах кайа йулса пыраҫҫӗ. Елӗк районӗнче хут пӗлмен 1735 ҫынран кӑҫал 2.0 ҫын, Вӑрнар районӗнче 1123 ҫынран 56 ҫын, Ҫӗмӗрле районӗнче 1165 ҫынран 154 ҫын, Шӑнкӑртам районӗнче 2.483 ҫынран 406 ҫын, Трак районӗнче 764 ҫынран 63 ҫын, Сӗнтӗрвӑрри районӗнче 946 ҫынран 34 ҫын, Хӗрлӗ Чутай районӗнче 786 ҫынран 173 ҫын, Ишлей районӗнче 537 ҫынран 56 ҫын ҫеҫ вӗрентсе кӑларнӑ. Пӑрачкав районӗнче хут пӗлмен 420 ҫынран кӑҫалхи ҫул пӗрне те вӗрентмен.

Райӗҫтӑвкомсем хутпӗлменлӗхе пӗтерес ӗҫе пӗтӗмпех районри ҫутӗҫ пайӗсемпе йалҫоветсем ҫине йӑвантарнӑ. Хӑйсем йенчен вӗсем ку тӗлӗшпе нимӗн те туман тесен те йӑнӑш пулмасть. Райӗҫтӑвкомсем, парти райкомӗсем йалсене, тӗрлӗ хатӗрлев планӗсене пурнӑҫа кӗртме, куллен ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ ҫынсем йараҫҫӗ. Йала пынӑ ҫынсем пур йенӗпе те ӗҫлеҫҫӗ, анчах пӗр ӗҫе — халӑха ҫутта кӑларас ӗҫе манаҫҫӗ.

Районри организацисем ку ӗҫ ҫине ҫакнашкал тимсӗр пӑхнине пула, йалсовечӗсем те сӳрӗккӗн ӗҫлеҫҫӗ. Вӑрнар районӗнчи Пӑртас йалсовет председателӗ Илйин пӗр имӗнсе тӑмасӑрах: — хутпӗлменлӗхе пӗтерме май ҫук, ҫавӑнпа вӑл ӗҫпе аппаланма та кирлӗ мар, — тесе калаҫать. Ҫӗмӗрле районӗнчи Тукас йалсовет председателӗ Шорка йулташ йалсоветра 13 ҫул ӗҫлет, анчах вӑл хутпӗлменлӗхе пӗтерес тӗлӗшпе нимӗн те тумасть. Чӑрӑш Хирлеп (Вӑрнар р.) йалсовет председателӗ Абрамӑв йалсовет тӑрӑх хутпӗлменнисем миҫе ҫын пуррине те пӗлмест, ҫитӗннисене вӗрентес йенӗпе кунта никам та ӗҫлемест.

Ҫакнашкалах комсомолпа профсойуз организацисем те хут пӗлменлӗхе пӗтерес ӗҫрен айакра тӑраҫҫӗ. Ку ҫитмен, вӗсем хут пӗлмен йе сахал пӗлекен комсомолӗцсемпе профсойуз членӗсене те шута илмеҫҫӗ, вӗсене вӗрентме тӑрӑшмаҫҫӗ.

Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе вырӑнти ҫутӗҫ оргӑнӗсем хутпӗлменлӗхе пӗтерес ӗҫӗн практикӑлӑ организатӑрӗсем пулса тӑмала. Партипе правительствӑ вӗсен аллине халӑха ҫутта кӑларас чаплӑ та мухтавлӑ ӗҫе шанса панӑ. Вӗсен, партипе правительствӑ постановленийӗсемпе усӑ курса, хутпӗлменлӗхе пӗтерес ӗҫе пӗтӗм хутпӗлекен ӗҫсыннисене мобилизацилемеле.

Пирӗн куљтармейӗцсен ҫарӗ пысӑк. Йалсоветсем ҫумӗнче пуринче те хутпӗлменлӗхе пӗтерес тӗлӗшпе ӗҫлекен ҫекцисем пур, ҫав ҫекцисенче пӗтӗмпе 7.000 куљтармейӗц тӑрать. Анчах ҫак актива хаљхи вӑхӑтра ӗҫе тивӗҫлипе мобилизацилемен.

Лайӑх ӗҫлекен куљтармейӗцсем, ҫекцисем паха примерсем кӑтартаҫҫӗ. Шӑмат йалсоветӗнче (Йетӗрне р.) куљтармейӗцсем ҫине тӑрса тимлӗн ӗҫленипе кӑҫалхи ҫул хутпӗлменлӗхе талкишпех те чӑнласах пӗтернӗ. Вӗренсе тухнисене Йетӗрне райӗҫтӑвкомӗн комиҫҫийӗ тӗрӗсленӗ, Шӑмат йалсоветне талкишӗпе хут пӗлекен йалсовечӗ тесе йышӑннӑ.

Куславкка районӗнчи Варасӑр йалсовечӗн куљтҫекцине Тимофейӗв йулташ йертсе пырать. Варасӑрта хутпӗлменнисем 173 ҫын пулнӑ. Тимофейӗв йулташ ҫитӗннисене вӗрентме чи лайӑх куљтармейӗцсене, учительсене хутшӑнтарнӑ, вӗсене ӗҫре куллен пулӑшса, кӑтартусем парса пынӑ. Ҫапла ӗҫленипе Варасӑрта хутпӗлменнисем пайанхи куна 10 ҫын ҫеҫ йулнӑ, вӗсене те халӗ вӗрентеҫҫӗ.

Анчах та кун пек ӗҫлекенсем республикӑра питех те сахал.

Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ҫитӗннисене вӗрентес ӗҫ республикӑра мӗнле пынине вырӑнти чӗрӗ примерсенчен мар, сводкӑсем тӑрӑх ҫеҫ пӗлсе тӑрать. Йе те пӗр чух питӗ тӗпчесе пӗлес килсен, пӗр-пӗр районри ҫутӗҫ пайӗн пуҫлӑхне хӑй патне чӗнсе илсе тӗпчет, йатлать, питех кирлӗ пулсан, вырӑнтан кӑларать.

Паллах, политикӑлӑ пысӑк та ответлӑ ӗҫпе ҫакӑн пек бӳрократла йертсе пырсан, ыррине кӗтме ҫук: Хутпӗлменлӗхе пӗтерес ӗҫре халӑх тӑшманӗсем — троцкиссем, бухаринӑсем, буржуалӑ-националиссем нумай сӑтӑрласа хӑварчӗҫ. Ҫутӗҫ оргӑнӗсенче ларнӑ тӑшмансем, ӗҫсыннисен тимлӗхне мӑкатас шутпа, 1932 ҫултах Чӑваш республикӗ хутпӗлменлӗхе талкишӗпех пӗтерчӗ тесе кӑшкӑрчӗҫ. Тӑшмансем ҫитӗннисен чипер ӗҫлесе пынӑ шкулӗсене аркатса йачӗҫ.

Тӳрех каламала, Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе унӑн вырӑнти оргӑнӗсем тӑшмансен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкийӗсене пӗтерес ӗҫе тивӗҫлипе тытӑнман. Малала кун пек вӑрахӑн ӗҫлениве тӳсме ҫук. Хутпӗлменлӗхе пӗтерес тӗлӗшпе панӑ срӯксем пурте иртсе кайрӗҫ. Ҫутӗҫ оргӑнӗсем хӑйсен халӑх умӗнчи пысӑк парӑмне сӑмахпа мар, ӗҫпе татмала. Партипе совет оргӑнӗсем, комсомол, профсойуз тата ытти общественлӑ организацисем ҫутӗҫ оргӑнӗсене конкретлӑ ӗҫре пулӑшса пымала.

Халӗ ҫулахи вӑхӑтра чылай ҫӗрте ҫитӗннисен хӗлле лайӑх ӗҫлесе пынӑ шкулӗсем те ӗҫлеме чарӑнчӗҫ. Ку йурӑхсӑр йапала. Ҫитӗннисене ҫулахи вӑхӑтра та вӗҫне ҫитиччен вӗрентмеле. Йалсенче халӗ каникула йе отпуска пынӑ студентсем, учительсем йе ытти тӗрлӗ интеллигентсем нумай. Вӗсене ҫитӗннисене вӗрентес ӗҫе аваҫтармала. Хутпӗлменлӗхе пӗтерес ӗҫ — пӗтӗм халӑх ӗҫӗ. Ӑна пӗтӗм халӑх умӗнчи ответлӑхпа туса пымала.

Уполномоченный Чувашглавлита № 342
Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 881.